350

# ПОДВИЖНИКЪ

## АЛАТЫРСКАГО СВЯТО-ТРОИЦКАГО МОНАСТЫРЯ

# Схимонахъ Вассіанъ.

## НА ЧУВАШСКОМЪ ЯЗЫКѢ.

УЛАТӐРТА СВЯТОЙ ВИҪ-ИШОСТАҪЛӖ ТУРӐ МОНАСТЫРӖНҪЕ
СӐВАПШӐН ТӐРӐШСА ПУРӐННӐ СХИМОНАХ ВАССІАН
ҪИНҪЕН КАЛАНИ.

8К

СИМБИРСКЪ.
Типо-литографія А. Т Токарева
1906.

# ПОДВИЖНИКЪ

## АЛАТЫРСКАГО СВЯТО-ТРОИЦКАГО МОНАСТЫРЯ

# Схимонахъ Вассіанъ.

## НА ЧУВАШСКОМЪ ЯЗЫКѢ.

**УЛАТӐРТА СВЯТОЙ ВИҪ-ИПОСТАҪЛӖ ТУРӐ МОНАСТЫРӖНҔЕ СӐВАПШӐН ТӐРӐШСА ПУРӐННӐ СХИМОНАХ ВАССІАН ҪИНҔЕН КАЛАНИ.**

СИМБИРСКЪ.
Типо-литографія А. Т Токарева
1906.

Печатать разрѣшается 1906 г. Цензоръ протоіерей Сергій Медвѣдковъ.

**Улатăрта, Святой Виç-Ипостаçлĕ Турă монастырĕнҫе сăвапшăн тăрăшса пурăнса, халĕ çав монастырте тупăкра выртакан Вассіан схимонах.**

Ҫĕмпĕр кĕпĕрнинҫе, Улатăр хулинҫе, 17-мĕш çĕр çул хушшинҫе, Святой Виç-Ипостаçлĕ Турă монастырĕнҫе монах пурăнăçĕпе пит ырă тăрăшса Вассіан схимонах пурăннă. Унăн ăраҫĕ-йĕхĕ çинҫен, унăн малтанхи пурнăçĕ çинҫен пĕлтерекен йапала нимĕн те йулман; анҫах ак çак тĕрĕс: вăл таса пурăнса, Турра йурăхлă пулнă, Турă унăн ӳтне çĕртмесĕр, унпа тĕлĕнмелле ĕçсем, хăватсем тăвакан туса мухтава кăларнă ăна.

Вассіан схимонах çинҫен „Памятник" йатлă кĕнекерен ак çак паллă: 1748-мĕш çулта, çурла уйăхин 26-мĕш кунĕнҫе, Елизавета Петровна патшара ларнă ҫух, Улатăрта, Святой Виç-Ипостаçлĕ Турă монастырĕнҫе настоятелре Меркурій Абрамов пурăннă ҫух, вăл Виç-Ипостаçлĕ Турă йаҫĕпе лартнă халхи собора тума вырăн уçнă; çав вăхăтра Вассіан схимонахăн тупăкне кăларнă; унăн тупăк ăшне хунă ӳҫĕ çĕрмен. Çав çĕрмен таса ӳт, çĕртен кăларсан, пĕр ерне çийелте уçă çĕртех тănă. Ҫăн çĕрменнине пĕлсе ĕнениҫҫен, çав çĕрмен таса ӳте Зосимапа Савватій аттесен йаҫĕпе лартнă çавăн ҫухнехи ăшă йывăç, ҫиркĕве йатса леçсе хунă; унта вăл хĕлĕпех çапла уçă тăнă. Вăл ӳте пуçтарăнса пăхнă ҫух ҫăнах та ӳтĕнҫе хăйĕнҫе те, турмтирĕсен те, тупĕкин те пĕр пăсăк (çĕрĕк) тавращĕ те пулман.

Çавăнтанпала мĕн халиҫҫенех Вассіан схимонаха пытарнă вырăна темĕн ҫухлĕ халăх çӳрет. Ӳт ҫирĕпе, йе ҫун ҫирĕпе сывмăр сынсем ун тупăкĕ çинҫе панихида тутараççĕ. Мĕн ĕлĕкренпех пулса тăнă йĕркепе

çулленех çурла уйăхин 26-мĕш кунĕнҫе Вассіан аттене асăнса пĕрлехи, йе монастырте тумалли панихидасем тăваççĕ, тата октябрĕн 10-мĕш кунĕ те, Вассіан аттен ангелĕ кунĕ, çавăн пекех панихидасем тăваççĕ. Çав кунсем ыран тенĕ ҫух собор ҫиркĕвĕнҫе çĕркĕлли пулаť.

1905-мĕш çулта Ҫĕмпĕрти Епископ, Преосвященнѣйшій Гурій пиллесе, Виç-Ипостаçлĕ Турă монастырин настоятель архимандрит Гавріил, ытти монахсемпе пĕрле, тата ырă ĕç тума тăрăшакан çынсем пулăшнипе, Вассіан схимонах тупăкĕпе йунашар алтар тунă; тупăкĕ вăл çав монастыр ҫиркĕвĕнҫех Хусанти Турă Амăшĕ йаҫĕпе тунă придѣльный ҫиркӳ айĕнҫе выртнă. Ку ҫиркĕве сарлакалатнă; вара вăл аслă, ирĕк ҫиркӳ пулса тăнă. Ăна çав çулах, раштав уйĕхин 5-мĕш кунĕнҫе, çав Преосвященнѣйшій Гурийех кĕл-туса тасатнă (освятить тунă). Çапла тунă хыççăн халĕ ĕнтĕ Вассіан схимонахăн тупăкĕ çав ҫиркӳре сылтăм йенҫи клирос айĕнҫе выртаť. Çавăнтах тата Вассіан атте тупăкĕ çинҫе унăн тимĕр пиçихийĕпе (вершипе) тимĕр хĕресĕ выртаť. Ват çынсенҫен йулнă сăмах тăрăх, çав тимĕр пиçихийе Вассіан схимонах хăй сыхса çӳренĕ тет. Тупăк умĕнҫе лампада çунса тăраť, ăна нихăçан та сӳнтермеççĕ.

Вассіан схимонах хăçан вилни çинҫен пĕлтерекен хут тавращĕ те Святой Вис-Ипостаçлĕ Турă монастырĕнҫе халĕ çук, мĕншĕн тесен унта ĕлĕкхи ĕç хуҫĕсем пур те ăпша кайнă; çунман пулсан, тен вĕсен хушшинҫе ун çинҫен çырнине тупса пĕлме те пулĕҫҫĕ. Вассіан вăл 1697-мĕш, 1698-мĕш çулсенҫе Святой Виç-Ипостаçлĕ Турă монастырĕнҫе пулнă пуçлăхсене çырнă хут çинҫи, çав монастыре тутараканни хăй пулнă-и, йе вăл ахаҫ монах пулнă-и,—ун çинҫен те

ваттисенҫен йулнӑ сӑмах нимӗн те ҫук. Улатӑр ҫыннисем пӗр ҫакна анҫах пӗлеҫҫӗ: Святой Виҫ-Ипостаҫлӗ Турӑ монастырӗнҫе Вассіан схимонах пурӑннӑ, теҫҫӗ, вӑл ҫын монах пурнӑҫне пит хытӑ тытнӑ, ӑна хула ҫыннисем пит пысӑка хурса хисепленӗ, теҫҫӗ. Унӑн ҫӗрмен ӳтне пӑхнӑ ҫух, унта унӑн пурӑнаҫне хӑйсен куҫӗпе хӑйсем курса лайӑх астӑвакан хӑш-хӑш ватӑ ҫынсем те пулнӑ; вӗсем ӑна святой монах-ҫӗ вӑл тесе хисепленӗ. Ҫӗртен кӑларнӑ ҫӗрмен таса ӳте ҫавсем ӗнтӗ Вассіан ӳҫӗ ку тесе палланӑ.

1749-мӗш ҫул, ҫӑв уйӗхӗнҫе, Вассіан схимонахӑн сӗрмен ӳтне тата тепӗр хут пуҫтарӑнса пӑхнӑ; ун ҫухне те ӗлӗк пӑхнӑ ҫухнехи пекех, ӳҫӗ те, тумтирӗ те, тупӑкӗ те пӗртте ҫӗрӗшмен, йепле пытарнӑ, ҫаплипех тӑнӑ. Схима тийекен ҫийелти тумтирӗ ҫине йӗппе ҫӗлесе ӳкернӗ Турӑ ҫырӑвӗ ҫинҫи сӑмахсем те вуласа тухма паллах пулнӑ. Вӑл вӑхӑтра Вассіан схимонахӑх тупӑкӗ умӗнҫе йаланах панихида тунӑ. Ҫав ҫӗрмен таса ӳте пуҫҫапма темӗн ҫухлӗ халӑх ҫӳренӗ: ҫирлӗ ҫынсем тупӑк ҫумӗнҫен пӑртакҫӗ та пулин шӑрпӑк татӑкӗ пеккисене хӑйпӑта, хӑйпӑта илнӗ; хыпар ҫӳренӗ: ҫав ҫирлӗ ҫынсенҫен хӑшӗ хашӗ ҫавӑлтех ҫирӗсенҫен сывалнӑ. Анҫах ҫапах та Святѣйшій Синод ун ҫухнехи Ҫул-хулапа Улатӑр Епископне Веніамина указ йарса, Вассіан схимонахӑн ӳтне ҫӗре пытарма хушнӑ. Ҫапла хушни вӑл ак мӗншӗн пулнӑ: ҫав ҫӗрмен таса ӳтрен курнӑ хӑватсене, ҫиртен ҫӗрӗлнисене, кам ҫӗрӗлнисенӗн йаҫӗсене хӑй вӑхӑтӗнҫе кӗнеке ҫине ҫырса хуман; тата ҫав ҫӗрмен ӳте иккӗмӗш хут кӑларса пӑхнӑ ҫух, вӑл ӳтрен ҫӑн-ҫӑнах сывални ҫинҫен ҫавӑлте пуранакансенҫен каласа тӑракансем пулман.

Вара ҫак сарӑмсӑр пурӑннӑ Вассіан схимонахӑн тупӑкӗ патӗнҫе, вӑл Турӑ умӗнҫе хута кӗнӗ тӑрӑх пу-

лакан хăватсем çинҫен хăйне уйăрăм кĕнеке çине çырса пымалла тунă. Çав çĕр айĕнҫе выртакан çĕрмен таса ӳт патĕнҫе Турă хăваҫĕ курăнса пулнă тĕлĕнмелле ĕçсем çинҫен Ҫĕмпĕр кĕпĕрни урлă таçта айакка çитех ĕненекенсем хушшине пит ҫас хыпар сарăла пуçланă. Çавăн ҫух вара нумайĕшĕ Вассіан схимонаха пуççапакансем, ăна хисеплекенсем, унăн таса пурăнăçĕ çинҫен каласа пĕлтерни нимĕн те çукран, унăн тупăкĕ патĕнҫе пулнă хăватсем çинҫен те пулин тĕрĕс пĕлтерсе калани пултăр-ҫĕ тесе хăйсем ĕмĕт тытнине кала кала кăтартнă.

Çавна кура вара Ҫĕмпĕр Епархийĕн пуçлăхĕ (Консисторіян 1904-мĕн çулта, йупа уйĕхин 25-мĕш кунҫи 12291-мĕш №-лĕ хуҫĕпе) Улатăр хулинҫи Турă Амăшĕ çуралнă праçник соборин протоіерейне, Улатăр уйасĕнҫе 1-мĕш округра благочинный пулса тăракан Николай Діомидова шаннă пуп таврашĕсене, полиціяран ҫынлă çынна ҫĕнсе, вĕсен умĕнҫе, Вассіан схимонахăн тупăкĕ патĕнҫе пулнă, уйрăм кĕнеке çине çырса хунă хăватсем çинҫен ҫиртен ҫĕрĕлнисенҫен хăйсенҫен те, вăл хăватсене куракансенҫен те приҫак çитерсе ыйтса тĕпҫеме хушнă. Çапла хушнă ĕçе протоіерей атте Діомидов ыйтса тĕпҫесе, Епархія пуçлăхне пăхса тухма пĕр çула йахăнтан (1905-мĕш çулта, йупуйĕхин 8-мĕш кунĕ) йанă.

Куракансем, кирек хăçан та тенĕ пекех, пур йенҫеп те тĕрĕс каланă тăрăх, Улатăр çыннисем те, Улатăр таврашĕнҫи инçетри йал çыннисем те, пĕтĕм Ҫĕмпĕр кĕпĕрни, сарăмсăр пурăннă Вассіан схимонах таса пурăннине, унăн Турă умĕнҫе хута кĕрсе тăни хăватлине çав тĕрлĕ хытă ĕненни пĕр нимĕнсĕрех мар. Çапла ĕненни çинҫен кĕлле çӳрекенсем пĕтĕм Россіана, таçта инçе Сибире çитех сарса çӳреççĕ. Вĕ-

сем Сароври святой Серафим монах патне кайма тухсан, Улатăрти Св. Виç-Ипостаçлĕ Турă монастырне те кĕрсе, унта çĕр айĕнꚉе çĕрмен таса ӳꚉĕпе выртакан, ырă пурăннă Вассіан схимонаха та пуççапса тухма хисеп тытаççĕ; Вассіан схимонахăн ӳꚉĕ çĕр айĕнꚉе çĕрмесĕр выртнине çавăнти ват çынсенꚉен йулнă сăмах ĕнентерсе тăраť.

Çавăнта ĕнтĕ ĕненекен çынсен ырă ĕмĕтне çитерес тесе, Турра йурăхлă пулнă çын çинꚉен ꚉап сарăлтăр тесе, пуринꚉен ытла Туррăн мухтавĕ сарăлтăр— Вăл хăйĕн святойĕсем хушшинꚉе тĕлĕнмелле, вĕсем урлă Вăл асаплă етемшĕн пысăк паллăсем, хăватсем тăваť тесе, Ꚉĕмпĕрти Епископ, Преосвященнѣйшій Гурій, протоіерей Діомидов тĕпꚉесе пĕлнĕ ĕçе, Вассіан схимонах тупăкĕ патĕнꚉе пулнă хăватсене çырса хунă кĕнекепе пĕрле, тата çав монастырĕн пуçлăх-монахĕ архимандрит Гавріил çав çырса хунă хăватсем çинꚉен кĕнеке çине пиꚉетлеме ирĕк паꚉꚉăр тесе тăрăшнă ĕçпе пĕрле, 1905-мĕш çулта, ꚉӳк уйăхин 16-мĕш кунĕнꚉе Святѣйшій Синода пăхса тухма йанă.

Ꚉиркӳсене пăхса тăракан Святѣйшій Синод çав пулнă хăватсене çырса хунă хута, Вассіан схимонах тупăкĕ патĕнꚉе хăватсем пулни çинꚉен тĕпꚉесе пĕлнĕ ĕçпе пĕрле пăхса тухсан, çав хăватсем пулнине куракансем те приꚉак çисе каласа панă тăрăх, вĕсене ꚉăна хунă; çавна кура вара, Преосвященный Гурийе 1906-мĕш çулта, нарс уйăхин 28-мĕш кунĕ, 2433-мĕш №-пе указ йарса, çав хăватсене çырса хунă хута кĕнеке çине пиꚉетлеме ирĕк панă; вăл кĕнекен йаꚉĕ вырăсла: „Подвижник Алатырскаго Свято-Троицкаго монастыря схимонах Вассіан, почивающій въ усыпальницѣ сего монастыря.“ Ꚉăвашла: „Улатăрта Святой Виç-Ипостаçлĕ Турă монастырĕнꚉе сăвапшăн тăрăшса пурăнса, халĕ çав монастырте тупăкра выртакан Вассіан схимонха.“

Ҫак пӗҫӗкҫӗ кӗнекене кӑмӑлтан вулама ырӑ ӗненекен ҫынсене паратпӑр; хӑватсем ҫинҫен мӗн ҫырнине, мӗн малта каланӑ пек тӗпҫесе пӗлнине, мӗн хыҫӗнҫен мӗн пулнине ун ҫине епир пурне те йӗркипе кӳртрӗмӗр.

# I.

## Вассіан схимонах курӑнни, ҫиртен сыватни.

Ҫӗмпӗр кӗпӗрнинҫи Улатӑр хули мѣщанӗ Петр Евдокимов Малыгин, 59 ҫулти ҫын, малтан Злобин йатлӑ йал ҫынни пулнӑ, ӑна ун ҫухне хушамаҫӗпе Злобинскій тенӗ. Ҫав Злобинскій каласа пӗлтерҫӗ: Вӑл ҫитӗнсе ҫитсен, 23 ҫулта ҫух, авланнӑ. Авлансан малтанхи ҫул, арӑмӗпе пӗрре хурӑнташӗсем патӗнҫе аҫа тӗне кӳртнӗ кун праҫникӗнҫе хӑнара пулнӑ; ҫавӑнта кунӑн ывӑннипӗ пуҫӗ ҫаврӑна пуҫлана, ку хӑсма тытӑннӑ; вара вӑл ирӗксӗр те пулин килне тухса кайнӑ. Кунӑн ҫамрӑк арамӗ упӑшкине курмасӑр, ӑна шырама тытӑннӑ; унтан ӑна: вӑл сывмарланса килне кайрӗ тесе каласа кӑтартнӑ; ку вара ҫавӑлтех ун хыҫӗнҫен килне кайнӑ. Пӳртне пырса кӗрсен, упӑшки унӑн урайӗнҫе сарӑлса, ҫапкаланса, ҫӑварӗнҫен кӑпӑк кӑларса выртнӑ. Упӑшкине мӗн пулнине, ӑна йепле пулӑшмаллине нимӗн те пӗлмесӗр, вӑл пит хӑраса ӳкнӗ. Ҫавӑнтан кайран унӑн упӑшкине тытса пӑрахни унӑн ҫасран ҫас пулса пынӑ, тытса пӑрахнӑ вӑхӑтра вӑл пит йывар йывӑр амӑннӑ: пуҫӗнҫе, аллисенҫе пысӑк сурансем пула пула тӑнӑ. Унӑн ӳҫӗ-тирӗ пӗтӗмпе шыҫӑннӑ, ҫӗрӗлех ҫӗрме пуҫланӑ, ҫапла вӑл вӑтӑр ҫулҫенҫен асапланса пурӑннӑ. Ҫав 30 ҫултан 15-кӗшне ӑна усал йерсе пурӑннӑ, ку вӑл усала „Алексѣй Патрикѣевич“ тесе ҫӗннӗ. Ухмаха тухса вӑл ӑрама-мӗнте те темиҫе хӳт та ҫӗре пере пере аннӑ: акӑ ҫиркӳ патӗн-

ҫен иртсе-туса кайнӑ ҫух, вӑл хӑш ҫухне мӗн те пулсан Турӑ ҫинҫен шухӑшланӑ; ҫавӑнтах сасартӑк ӑна хӑйӗн йулташӗ Алексѣй Патрикѣевич пырса тӑни курӑннӑ; вӑл ӑна темӗн те пӗр тума хушнӑ, ун умӗнҫе шӑхлиҫӗ каланӑ, ӑна ташлаттарнӑ; ку куҫне хупса ҫӳлелле сикнӗ, унтан пӗтӗмпе халран кайса, пӗр туйми пулса ҫӗре, йе пыҫҫак ҫине йӑванса кайнӑ. Ҫапла ҫапкаланса, асапланса пӗтсе, вӑл темӗнҫҫен пӗр пӗлми выртнӑ. Ӑна ҫас-ҫасах плеҫҫескисем ҫыха ҫыха пӑрахнӑ. анҫах нимӗнле вӗрен-тилкепепе те ҫыхса ҫарайман ӑна. Унӑн вӑйӗ калама ҫук нумай пулнӑ: вӗрен-тилкепене вӑл ерешмен карти пек анҫах тат каласа пӑрахнӑ; хӑш ҫухне ӑна ҫиҫ-сакӑр ҫын та тытса ҫыхайман. Ҫав 15 ҫул хушшинҫе вӑл Христосӑн таса ӳҫӗпе таса йунне ашне илмен, ҫиркӗве те ҫӳремен, пӗр Христос ҫап-ҫутӑ ҫӗрӗлсе тӑнӑ кун (Мун-кунта) анҫах ҫиркӗве кайнӑ, унта та малтанхи кун анҫах пынӑ. Ун ҫухне вӑл, Мун-кун каҫ умӗн, Алексѣй Патрикѣевичран ак ҫапла каланӑ сӑмахсем илтнӗ: „Пеҫҫа тусӑм, халӗ ӗнтӗ акӑ ҫиркӗве кай, епӗ сана нимӗн тума та пултараймастӑп: мана халӗ хама тимӗрлесе хунӑ, тенӗ. Ҫавӑнпа вӑл Мун-кунӑн малтанхи кунӗ ҫулленех кӗлерӗ тӑнӑ; ытти кунсенҫе вара ҫулталӑкӗпех ӑна Турӑ ҫинҫен мӗн те пулин каланине илтме те йывӑр пулнӑ. Унӑн ҫеҫек пек ӳссе илемленсе пырас ҫамрӑк пурӑнӑҫӗ ҫапла йӗрсе тарӑхса пурӑнса иртсе пынӑ. Унӑн ӗлӗкхи укҫи пулнӑ, ҫав укҫапа вӑл Улатӑр больницинҫе нумай выртнӑ; темиҫе хут Хусана кайнӑ, клиникара выртнӑ, ҫапла темӗн ҫухлӗ укҫа пӗтернӗ, анҫах ҫапах та унӑн ҫирӗ тӳрленме мар, тата ытла вӑйлӑланса пынӑ; кайран кайран пит паллӑ тухтӑрсем те, унӑн сӑмси путнине, куҫӗсем аран аран тытӑнкаласа тӑнине, пӗр куҫӗ тата пӗтӗмпех тулта

тӑнине кура, ӑна ѳмеллеме те пӑрахнӑ; ҫавӑнтан вара тухтӑрсем сывалма пулӑшӗҫ тесе ӗмӗтленме унӑн пӗр шанҙӑк та пулман. Ҫав 30 ҫул хушши ҙирпе асапланнӑ ҙух, вӑл 1896-мӗш ҫулта, Самар хулинҙе пит ӑста тухтӑр пур тенине илтнӗ; ун ҫинҙен илтсенех, вӑл ҫавӑн патне кайма хатӗрленнӗ. Ыран тухса кӑйас тенӗ ҙух, вӑл Улатӑр хули тухтӑрӗ патне суранӗсене ҫыхтарма кайса килнӗ. Тухтӑр унӑн суранӗсене пӗтӗмпех тирпейлесе ҫыхнӑ, тулалла тухнӑ куҫне йапала хурса пусарса ҫыхнӑ, тепӗрне, хута ҫутӑ кӗмеллӗх шӑтӑк касса уҫса, ҫав хута хурса ҫыхнӑ. Шӑп ҫав вӑхӑтра Турӑ ӑна Хӑйӗн ырӑлӑхне курма панӑ: ӑна пулӑшма Вӑл Хӑйне йурӑхлӑ пулнӑ ҫыннине, ҙиртен сыватакан Вассіан схимонаха йанӑ. Ҫак ҙирлӗ ҫын килне тавӑраннӑ ҙух, хӗр-арӑм монастырӗ ҫтани хыҫӗнҙе хӑйне: Петр Злобинскій, тесе ҙеннӗ сасӑ илтнӗ,—ӑна ҫынсем йалан ҫапла ҙӗннӗ. Злобинскій хӑйӗн куҫне хупласа ҫыхна хутри пӗҙӗкҫеҫҫӗ шӑтӑк витӗр ҙирлӗ куҫӗпе тинкерсе пӑхнӑ та, хӑй ҫумӗнҙе пӗр палламан ҫын тӑнине курнӑ; вӑл ҫын ҫӳлех пулман, хӑй шурала пуҫланӑ, вӑрӑм монах тумтирӗ тӑхӑннӑ; вӑл ыйтнӑ: сана мӗншӗн капла ҫыхнӑ, нумайранпа-и? тенӗ. Ҙирлӗ ҫын ӑна хӑй тахӑҫантанпа ҙирлӗ ҫинҙен йӗркипе каласа парсан, ҫак курӑннӑ монах каланӑ ӑна: сываласшу килет пулсан, есӗ ѳпӗ мӗн хушнине ту. Пӗлетӗн-и? Виҫ-Ипостаҫлӗ Турӑ йаҙӗпе лартнӑ арҫын монастырӗнҙе вилнӗ ҫын шӑтӑкӗ пур, ун ӑшӗнҙе Вассіан схимонахӑн ӳҙӗ выртат; уншӑн унта вилнӗ ҫын кӗлли (панихида) тӑваҫҫӗ; ҙун ҙирӗпе асапланакансене те, ӳт ҙирӗпе асаплакансене те, ӗненӳ тӑрӑх, Турӑ унӑн кӗллипе сывлӑх парат. Есӗ те акӑ кай та, Вассіан схимонӑхшӑн виҫӗ панихида тутар, унтан Ҫӑлакаппа Турӑ Амӑшне тав-туса молебен тутар; вара есӗ

йăлтах сывалăн, тенĕ. Ҫирлĕ ҫын ҫавна тума пулнă. Вăл хăй кампа калаҫнине пĕлес тесе: кам есĕ, ăҫтан килнĕ? тесе ыйтасшăн пулнă, анҫах сасартăк ҫав вăхăтрах монах курăнми пулнă; Злобинскій ăна йĕритавра ҫавăрăна ҫавăрăна шыраса та пăхнă та, анҫах хăй таврашĕнҫе никама та курман. Килне тавăрăнсан вăл, хăй мĕн курнине, виҫĕ панихида тутарма, тавтуса молебен тутарма асăннине, хăйне каланă тăрăх, ҫавсем хыҫҫăн хăй ҫĕрĕлессине арăмне каласа кăтартнă. Арăмĕ ҫапла каласа кăтартнине илтсен, савăннипе: Турă асапланакан ҫынна хайĕн ырăлăхне кăтартать тесе, Турра йĕре йĕре тав-тунă; ҫавăнтан вара вĕсем ҫак курăннă монах—шăтăкра выртакан Вассіан схимонах хăйех иккенне ăнласа илнĕ. Злобинскійĕн арăмĕ, упăшки Вассіан схимонахшăн панихида тутарма кайатăп тенине илтсен, пит савăннă. 1896-мĕш ҫулта, ҫурла уйĕхин 2-мĕш кунĕ вĕсем Вассіан схимонаха пытарнă шăтăка пырса, малтанхи хут панихида тутарнă. Панихида вăхăтĕнҫе ҫак ҫирлĕ ҫын шалт сиккелесе, хуҫкаланса пĕтнĕ, унтан: мĕншĕн хăвалатăн мана? тесе кăшкăрса йанă. Ҫакăн хыҫҫăн ҫирлĕ ҫын лăпланнă, ăна ҫăмăллăнах туйăнса кайнă; вăл Вассіан схимонахăн лампадинҫен йывăҫ-ҫăвĕ илсе хăйĕн суранĕсене сĕрнĕ, унтан ҫав уйăхрах 4-мĕш кун, 3-мĕш хут молебен тутарнă хыҫҫăн вăл Турăран сывлăх ыйтса, ҫав вилнĕ Вассіан схимонахăн тимĕр пиҫиххине хăй ҫине ҫыхнă, унтан тупăкне ҫуп-тунă.

Урисенҫи шыҫă ҫавăнтан сасартăк ҫакнă, хăй тăхăнса пынă калушсем ăна аслă пулса тăнă; унтан килне тавăрăнсан, питне салтнă та, унти суранĕсем унăн пур те ўт илнĕ, суранĕсем ҫинҫи кĕсенĕсем тутăрисем ҫумне хăпса пынă; ҫавăнҫҫен виҫ кун кăна маларах сиксех тухнă куҫĕсем нихăҫан та сурман пек

пулса тăнă, ури-аллинҫи суранĕсем те пĕтĕмпех тӳрленнĕ. Ҫак ҫирлĕ пулнă ҫын вара, хăй сывалнă хыҫҫăн, Ҫăлакана, Турă Амăшне тав-туса молебен тутарнă; ҫав вăхăтранпа вăл хăй сывалнă кун Вассіан схимонахшăн ҫулленех панихида тутарма асăннă, ăна вăл халĕ мĕн пăйанхи кунҫенех тутарса пырать. Вăл хăй те, унăн арăмĕ те, тата ҫав Злобинскій пĕлекен Улатăр хули ҫыннисем те вăл тĕлĕнмелле сывалнинҫен мĕн халиҫҫенех савăнса тĕлĕнсе тăраҫҫĕ. Турра та, Турра йурăхлă пулнă Вассіан схимонаха та тав-туса, вăл ҫавăнтанпала халĕ сывалса, суту-илӳ тума, ҫиркĕве ҫӳреме, Христосăн ҫаса ӳҫĕпе йунне сыпма пуҫланă. Вăл ҫирлĕ пулни ҫинҫен унăн пăсăлса пĕтнĕ питнекуҫне курса та ĕненмелле. Ҫав ĕҫсем ҫинҫен ĕнентерсе, Ултăр хули мĕщанĕ Петр Евдокимов Малыгин алă пуснă.

Ҫакăнта калană ҫир пулни ҫинҫен, вăл ҫиртен сывални ҫинҫен ĕнентерсе, хула сыхлакансен асли, унтеръ-офицер, Уртаттив хули мĕщанĕ Иван Александров Ивакин хăй алă пуснă.

Улатăр хули мĕщанĕ Петр Евдокимов Малыгин манран ҫăн-ҫăнах темиҫе хут та им-ҫам ыйтса, хăйне пулăшма йăлăнҫĕ: Врач Болтырев.

Епĕ Улатăр хулин сыхласа тăракан плеҫҫескийĕ ҫăн калатăп: ҫакăнта калană Улатăр хули мĕщанĕ Петр Евдокимов Малыгин тытса пăрахакан ҫирпе асапланать-ҫĕ; унтан пуҫне тата вăл ҫан-ҫурăмĕнҫи, пуҫĕнҫи тĕрлĕ ҫĕрте тухнă суранĕсене ҫыхса ҫӳрет-ҫĕ. Улатăр хулин 1-мĕш участкине пăхса тăракан плеҫҫески Ясницкій.

## II.

### Хăлхасăр пулнинҫен сывални.

Ҫĕмпĕр кĕпĕрнинҫе, Улатăр уйасĕнҫе, Иҫҫикс сали арăмĕ Анна Өеодорова Кудимова, 48 ҫулхи ҫын, Ула-

тăрта хăйен çурҫĕпе пурăнат; çав арăм ак çак ĕç çинҫен каласа паҫĕ; 1897-мĕш çулта, шăннипе вăл йалтах хăлхасăр (илтми) пулнă. Вăл çапла вăрах ҫирлесе пурăннă. Çав вăхăтра вăл темиçе хут та Улатăрти земскій больницана кайа кайа килнĕ, анҫах усси пулман: тухтăр каланă тăрăх, унăн хăлхи нихăçан та тӳрленесле пулман. 1899-мĕш çулҫҫен вăл çаплах хăлхасăр пурăннă. Вассіан схимонах кĕллипе нумайĕшĕ сывалса ырăлăх курнине пĕлнĕ вăл; çавăнпа Вассіан схимонахшăн панихида тутарма асăннă. 1899-мĕш çулта вăл хăйен упăшкипе пĕрле Вассіан схимонаха хунă шăтăка пынă; çак хăлхасăр пулнă арăм унта панихида тутарнă; панихида вăхĕтĕнҫе вăл хăй сываласшăн Вассіан схимонаха Турра кĕл - тума пит ăшă кăмăлĕнҫен тархасланă.

Килне тавăрăнсан вăл ҫас çывăрнă; çыварнă ҫух вăл тĕлĕкĕнҫе Вассіан схимонаха курнă; схимонахăн аллинҫе хĕрес пулнă. Вăл çак арăма хĕресне ҫуп-тутарнă та, хăй çавăнтах курăнми пулнă. Арăм ыйхинҫен вăрансан, хăйĕн минтерĕ çинҫе пӳр курнă, вăл унăн хăлхинҫен тухнă; çавна курсан, вăл пит тĕлĕннĕ, унтан çавăнтах сехет çӳренине илте пуçланă. Хăйне хăй ĕненмесĕр, вăл упăшкинҫен ыйтнă, упăшки те ăна çавнах каланă. Сывалнă арăм вара Турра та, Турра йурăхлă пулнă Вассіан схимонаха та тав-тунă. Çавăнтанпа ĕнтĕ мĕн халлиҫҫенех вăл витĕр аван илтет.—Çак арăм, хăйĕн çылăхĕсене каçаракан ашшĕ (паҫăшка) вĕрентнĕ тăрăх, хăй сывалнă ĕç çинҫен монастыр пуçлăхне каласа пĕлтересшĕн пулнă, анҫах вăл уншăн хăйне мухтанҫăк тесе каласран хăранă; унтан вара ăна вĕрентнĕ: апла тунипе ĕсĕ Ху мухтанмастăн, ун урлă, Вассіан схимонах кĕллипе ҫиртен сыватнăшăн, Туррăн мухтавĕ сарăлат, тенĕ. Çакăнта çырнă ĕç çинҫен ҫăн

калатăп. Арăм çыру пĕлменрен уншăн хам алă пусатăп, çакăнта мĕн каланине те пурне те тĕрĕсне ĕнентеретĕп: унăн упăшки, Иҫҫикс сали çынни Димитрій Андреев Кудимов.

## III.

### Иван Петров Салюков сывални.

Ҫĕмпĕр кĕпĕрни, Кăрмăш уйасĕ, Мурзицк вулăсĕ, Мачкас йалĕсем, 39 çулхи çын, Иван Петров Салюков Улатăр хулинҫе хăйĕн çурҫĕпе пурăнаṫ; вăл Мускавпа Хусан хушшинҫи ҫукăн çул çинҫе тăраṫ; çав çын ак çак ĕç çинҫен каласа пĕлтерҫĕ:

1900-мĕш çулта Салюковăн сулахай урин ҫăркуççи айĕнҫе ҫилай сарлака тимĕре тухнă, вăл йалан йĕпенсе тăнă, хăй пит кĕçтнĕ те, ыратнă та. Унтан тата çав çул пĕтнĕ ҫух унăн тăракан тавраш ĕ шыçăннă. Хăйне сиплĕх тупасшăн вăл Улатăр больницинҫи тухтăр патне те, Сĕве хулинҫи станцăри тухтăр патне те темиçе хут та кайса пăхнă, анҫах ниăçтан çăмăллăхне тупайман. Ҫав ҫирпе асапланнă вăхăтра, 1902-мĕш çулта, çăв уйăхĕнҫе, тепле ун аллине Улатăрти Святой Виç-Ипостаçлĕ Турă монастырĕ çинҫен каланă пĕр кĕнеке ленкнĕ. Вăл çав кĕнекене вуласа тухса, Вассіан схимонахăн ўтне çĕрмен халлĕн тўпни çинҫен пĕлнĕ. Ҫавăн хыççăн вăл, Турă пулăшассине пит хытă ĕненсе, Вассіан схимонахшăн панихида тутарма асăннă. Хăй асăннине ҫас тунă вăл. Хăйĕн ывăлĕпе Вассіан схимонахăн шăтăкне пырса, унта панихида тутарнă; çаван хыççăн Вассіан схимонахăн тупăкне пуççапнă та, унăн тимĕр пиçиххине çыхса: епĕ ҫиртен сывалма Турă умĕнҫе маншăн хута кĕр тесе, йĕре йĕре тархасланă ăна. Вара çавăнтах малта каланă икĕ ҫирĕнҫен те пĕтĕмпех сывалнă вăл. Ҫавăнта

тупӑк патӗнҫе тӑракансем нумайӗшӗ ҫак ҫиртен сывалнӑ ҫын ҫинҫен анҫах шухӑшласа тӑнӑ, мӗншӗн тесен савӑннипе ку пит хытӑ йӗрсе, хӑй йепле сывални ҫинҫен кала кала кӑтартнӑ. Вара пур те Вассіан кӗллипе, Турӑ умӗнҫе вӑл хута кӗнипе ҫиртен сывалнӑшӑн, Турра мухтаса тав-тунӑ.

Ҫакӑнта ҫырнӑ хам ҫир ҫинҫен, епӗ унтан сывални ҫинҫен каланине ӗнентерсе алӑ пусрӑм. Мачкас йалӗ ҫынни Иван Петров Салюков. Упӑшки ҫирлӗ пулнине, вӑл ҫав ҫиртен йепле сывалнине курса-пӗлсе тӑракан унӑн арӑмӗ, хӑй ҫыру пӗлменрен, вӑл хӑй ытнӑ тӑрӑх, епӗ алӑ пусрӑм: Иван Петров Салюков. Мускавпа Хусан хушшинҫи ҫукун ҫул ҫинҫи кондуктор Иван Петров Салюков хӑйӗн шӑракан таврашӗнҫи шыҫҫине тӳрлетме Сӗве хулинҫе ҫирлӗ ҫынсене пӑхакан пӳлӗме пырат-ҫӗ: Сӗве хулинҫе ҫирлӗ ҫынсене пӑхакан пӳлӗмри фельдшер К. Мидлев.

## IV.

### Шӑмӑ ҫӗрнӗ ҫиртен сывални.

Улатӑр хулинҫе пурӑнакан, Ҫӗмпӗр кӗпӗрни, Ӑртату хули крепҫен - арӑмӗ Варвара Андреева Палачева ак ҫак ӗҫ ҫинҫен каласа паҫӗ:

Вӑл хӑй Хусанта пурӑннӑ; 1901-мӗш ҫулта унӑн Маріа йатлӑ 10 ҫулхи хӗрин сулахай аллин пуҫ-пурни ҫинҫе пысӑк та мар мӑклӗ пӗҫӗккӗн пӗҫӗккӗн шав ӳссе пынӑ, унтан ырата пуҫланӑ; кайран ку шӑтнӑ, ун ӑшӗнҫен пӳр йухса тӑнӑ. Амӑшӗ хӗрне мӗнле суран ленкнине пӗлмен; вӑл Хусанта Стефановскій профессор патне кайнӑ; ҫак профессор ӑна им панӑ та, анҫах каланӑ: ку суран хӑрушӑ, касмасӑр тӳрленес ҫук, тенӗ. Профессор вӑл сурана — шӑмӑ ҫӗрнӗ суран, тенӗ. Арӑмӑн хӗрӗ Маріа хӑранӑ, ҫавӑнпа амӑшӗ хӗрин су-

ранне кастарман. Сурӑнӗ куллен кун ӳснӗҫем ӳссе пынӑ. Амӑшӗ укҫине хӗрхенмен, хӗрне емеллесе темӗн ҭухлӗ укҫа пӗтернӗ, хӗрне ҫапах нимӗн сиплӗх те пулман. 1902-мӗш ҫулта вӗсем Хусантан Улатӑра куҫмалла пулнӑ. Улатӑрта та йалан Хусантан ҫырупа им-ҫам илсе тӑнӑ. Унтан хӗрин сурӑнӗ шав арасланнӑҫем арасланнине кура, амӑшӗ хӗрне ӳкӗтлесе килӗштерсе, вӗсем каллах Хусана кайнӑ. Профессор патне пынӑ та, вӑл вӗсене: ку сурана малтан ляписпа ҫунтармалла, унтан касмалла, тенӗ. Кастарма хушнине илтсен, хӗр-аҭа каллах йӗре пуҫланӑ; амӑшне: кастарма ан килӗш, кастариҭҭен аҭа пӗрех хут каллах Улатӑра тесе тархасланӑ. Улатӑра таврӑнсан, вӗсем Стефановскій професссор ҫырса панӑ импе суранне нумайҭҭен емелленӗ. Унтан ҫак хӗрӗн амӑшӗ Улатӑрта тата Иван Ѳедорович Болдырев тухтӑра йӑлӑнма шухӑшланӑ; кӑна вӗсем хӑйсен килне ҭӗнсе пынӑ. Тухтӑр хӗр ҭирне пӑхса пӗлсен, каланӑ вӗсене: ку ҭир хӑрушӑ, вӑрӑма пыракан йапала, ӑна касмасӑр тӳрлетме ҫук, тенӗ. Тухтӑр хайсан, хӗрӗн амӑшӗ пит куҫана пуҫланӑ; вара вӑл, ку хӗрӗмӗн суранне Турӑ майа йарсан анҭах ӗнтӗ тесе, пӗтӗмпех Турӑ ҫине шаннӑ. Хӗрӗн амӑшӗ Вассіан схимонах кӗллипе нумайӗшӗ ҭиртен сываласҫӗ тенине илтнӗ; вара Турра йурӑхлӑ пулнӑ ҫын пулӑшӗ тесе, вӑл пит хытӑ ӗненнӗ; унтан вӑл ҫак Вассіаншӑн унӑн тупӑкӗ ҫинҭе панихида тутарма асӑннӑ. Тухтӑр пӑхса кайсан тепӗр кунне, 1903-мӗш ҫулта, ҫурла уйӑхин 15-мӗш кунӗнҭе, унӑн хӗрӗ хӑйӗн асламӑшӗпе Пелагія Петрова Татариновапа пӗрле Вассіан схимонаха хунӑ шӑтӑка пынӑ; унта Вассіан схимонахшӑн панихида тума ыйтнӑ. Маріа хӑйӗн суранлӑ аллине салтса, ун ҫине тупӑк ҫумӗнҭен илнӗ хӑйӑра сапнӑ, тата Вассіан схимонах умӗнҭи лампадаран йывӑҫ ҫӑвӗ илсе хӑйӗн суранне

сӗрнӗ; Вассіана хунӑ шӑтӑкра, тупӑкӗ патӗнҫе унӑн сӑнӗ ҫакӑнса тӑнӑ; ҫак хӗр унӑн сӑнӗ умне пырса, хӑйӗн суранлӑ аллине схимонахӑн таса хӗресе тытса тӑракан аллисем ҫумне ҫыпӑҫтарнӑ, хӑй ӗненсе ҫавӑнтах йӗре йӗре сывлӑх ыйтнӑ.—Мӗн пулнӑ вара ҫавӑнтан?!— Унӑн ыратасси ҫав каҫах лӑпланнӑ, суранӗнҫен пӳр йухма ҫарӑннӑ; каҫхине вӑл суранне тата йывӑҫ-ҫӑвӗпе сӗрсе выртнӑ. Ирхине ҫакӑн суранӗ пӗтӗмпех тӳрленнине курса, амӑшӗ те, асламӑшӗ те тӗлӗнсе кайса, темӗн тӗрлӗ савӑннӑ, савӑннипе вӗсем йӗнӗ. Ҫиртен сывалсан, амӑшӗпе хӗрӗ тата тепӗр хут Вассіан схимонах шӑтӑкне кайнӑ; унта Турра та, Ӑна йурӑхлӑ пулнӑ Вассіан схимонаха та тав-туса, схимонахшӑн панихида тутарнӑ. Ҫиртен йепле сывални ҫинҫен вӗсеҫав монастыр пуҫлӑхне архимандрит аттене Гавріила кӗрсе каласа тухнӑ. Ҫавӑнтан вара халиҫҫен унӑн хӗрӗ нимӗн ҫир пуррине те пӗлмест, вӑл хут вӗренме пуҫларӗ. Вассіан схимонах кӗллипе Турӑ кӑтартнӑ ырӑлӑха асӑнмалӑх, хӗрӗн пӳрни ҫинҫе тӳрленнӗ суран хыҫҫӑн ҫӗвӗ палли анҫах йулнӑ. Ҫавӑн ҫинҫен ӗнентерсе, хамӑн ҫамрӑк хӗрӗмшӗн унӑн тӑванамӑшӗ хам алӑ пусатӑп: Варвара Андреева Палачева,

## V.

### Ура суранӗ тӳрленни.

Улатӑрта Святой Виҫ-Ипостаҫлӗ Турӑ монастырӗнҫе пурӑнакан Ҫӗмпӗр хули мӗщанӗ Василій Петров Крживицкій, 22 ҫулхи ҫын, ҫак ӗҫ ҫинҫен каласа паҫӗ: 1901-мӗш ҫулта, авӑн уйӑхӗнҫе вӑл витӗр хытӑ шӑннӑ. Шӑннипе унӑн сулахай ури ҫинҫе пилӗк тӗлте пысӑк суран пулса тӑнӑ, вӗсенҫен пӳр йухнӑ, усал шӑршӑ сарӑлса тӑнӑ, ҫавӑлтех тата ури пит ҫикӗшсе

урнă. Пурăннăçемĕн унăн ури хытăран хытă ыратнă, кайран кайран унăн çӳреме те, тăма та муҫĕ йулман. Монастырти монахсем унăн ури сурнине курса, ăна больницца кайма канаш панă: больницаран сиплĕх пулҫми, тенĕ. Çак пĕрре, 1901-мĕш çулта, раштав уйăхĕ пĕтнĕ ҫух, ҫиркӳре çĕр-келлинҫе тăнă; кĕлĕ пĕтиҫҫен тăма пултарайман та, вăл ҫиркӳрен тухса кайнă; çавăн ҫухне вăл хытă ĕненс Вассіан схимонах шăтăкне йĕрсе пынă; ун умĕнҫи лампадаран йывăç çăвĕ илнĕ те, хăйĕн сывлăхĕшĕн çак ватă схимонаха Турă умĕнҫе хута кĕме тархасланă. Унтан хăйĕн монах пӳртне (келйинне) кайса, ыратакан урине çав йывăç-çăвĕпе сĕрсе, каллах ҫиркĕве кайнă. Кĕлĕ пĕтсен, вăл хăйĕн монах пӳртне таврăннă, унта ыратакан урине салтса пăхнă та, унăн ури шыççи йăлтах ҫăакнă, хăйне те çăмăлăн туйăннă. Вăл урине тата тепĕр хут çав йывăç-çăвĕпе сĕрнĕ те, ирҫҫен ури суранĕсене пĕтĕмпех ӳт илнĕ. Вара вăл Вассіан схимонахшăн панихида тутарса, Турра та, Турра йурăхлă пулнă ватă Вассіан схимонаха та тав-тунă. Халĕ çав Кржевицкійĕн ури пĕрре те сурмасть. Унăн ури çинҫе ҫăнах та сурансем пулнине халĕ лап-лап йулнă вырăнсем паллах кăтартса тăраççĕ.

Çакăнта мĕн каланине хам алă пусса ĕнентеретĕп: Ҫĕмпĕр хули мѣщанĕ Василій Петров Кржевицкій.

Унăн ҫирĕ çинҫен, вăл унтан йепле сывални çинҫен ĕнентерсе калатăп: монахсене пулăшса тăракан Филипп Потапов Никитин.

## VI.

### Ҫаухуткаран сывални.

Ҫĕмпĕр кĕпĕрнин Улатăр хули мѣщанĕ Александр Макарович Спиридонов, 19 çулхи çын, ак çакăн çинҫен каласа кăтартрĕ:

1901-мĕш çулта, ҫӳк уйăхин малтанхи кунĕсенҫе, вăл ашшĕпе вăрманта ĕçленĕ, унта пит хытă шăннă. Çав шăннă хыççăн вăл пит хытă ӳсĕре пуçланă, ӳсĕре ӳсĕре йун сурнă, унăн вăйĕ пĕтнĕ; çапла вăл 1902-мĕш çулхи çăв-уйăхĕҫҫен вырăнпах пĕр тапранаймасăр выртнă. Унăн ашшĕ-амăшĕ ăна сыватасшăн укçа хĕрхенмен: ывăлĕ ҫирлĕ вăхăтра вĕсем сиплĕх шыраса тухтăрсем патне çӳренĕ, ҫас-ҫасах килне фельдшера илсе пынă, темиçе тĕрлĕ им-çам пара пара пăхнă, анҫах ҫирĕ нимĕн ҫухлĕ те майа кайман; унăн ҫирĕ майа каймалла та пулман иккен, мĕншĕн тесен тухтăрсем унăн ҫирне „ҫаххутка" тенĕ. Кайран кайран тухтăрсем каланă вара: ку ҫиртен ҫĕрĕлме нимĕн шанҫăк та çук, тенĕ. Хăш хăш ырă çынсем Хусана кайма, йе Мускавпа Хусан хушшинҫи ҫукăн çул çинҫе, Шăхран станцинҫе пурăнакан Петр Евдокимович Сосоев тухтăр патне кайма канаш панă,—ку Сосоев тийекен тухтăр тĕрлĕ курăкпа емеллет, тенĕ. Çак ҫирлĕ аҫăнăн амăшĕ Улатăрти тухтăрсенҫен: ку ҫиртен ҫĕрĕлме нимĕн шанҫăк та çук тенине илтсен, нимĕн тума пĕлмесĕр пит хуйхăрса: ывăлăма ҫĕрт тесе, йĕре йĕри Турра кĕл-тунă. Вĕсем ыран Шăхран станцине, Сосоев тухтăр патне кайас тенĕ каç, çак ҫирлĕ аҫа çывăрса кайнă; кăшт çывăрнă хыççăн вăраннă та, амăшне каланă: епĕ ак халĕ тин Виç-Ипостаçлĕ Турă монастырĕнҫи Вассiан схимонахăн шăтăкне пырса кĕтĕм пек, унта мана пит аванăн туйĕнҫĕ, тенĕ. Амăшĕ çавна илтсен, Вассiан схимонахшăн панихида тутарма асăннă, анҫах тухтăр патне кайса килсен тутарăпăр, тенĕ. 1902-мĕш çулта, çăв-уйăхин йулашки кунĕсенҫе, Шăхран станцине, тухтăр патне кайнă ҫух, вĕсем Салюков кондуктора тĕл-пулнă; Салюков ҫирлĕ аҫана курсан, унăн амăшĕ патне пырса ыйтнă: есĕ ку ывăл-

на Хусана илсе кайатӑн пулмалла? тенӗ. Аҫа амӑшӗ калanӑ: епир Шӑхран станцинҫи тухтӑрпа калаҫса пӑхма кайатпӑр, тенӗ. Унтан вӑл ывӑлӗ йеплe ҫирли ҫинҫен каласа кӑтартнӑ ӑна. Кондуктор ӑна хирӗҫ каланӑ: епӗ хам та ура суранӗпе пит вӑрӑм асаплантӑм, икӗ ҫула йахӑн темиҫе тӗрлӗ им-ҫам та илсе пӑхрӑм, нимӗн усӑ та кураймарӑм. Пӗрре епӗ, Вассіан схимонах ҫинҫен ҫырнӑ кӗнеке тӗл-пултӑм. Ҫавна вулаcа тухсан, епӗ Турӑ умӗнҫе хамшӑн хута кӗме Вассіан схимонаха йӑлӑнса кӗл-турӑм, унӑн кӗллипе епӗ унӑн шӑтӑкӗнҫен тухиҫҫенех сывалтӑм, тенӗ. Ҫапла калаҫса пырса, вӗсем сисмесӗрех Шӑхран станцине ҫитнӗ. Амӑшӗпе ывӑлӗ Сосоев тухтӑр патне кайнӑ. Тухтӑр вӗсене им парасса панӑ та, анҫах каланӑ: ку ҫиртен сывалма шанҫӑк ҫук, тенӗ. Вӗсем вара каллах хуйха ӳксе, ҫав кунах килне Улатӑра ларса таварӑннӑ. Аҫан ашшӗ-амӑшӗ вара ҫавӑнта тин тӗлӗк курнинҫен те, кондукторпа тӗл-пулса калаҫнинҫен те аҫишӗн Турӑ умӗнҫе хута кӗме, уншӑн кӗл-тума Вассіан схимонаха тархаслама Турӑ Хӑй кӑтартнине ӑнласа илнӗ. Сосоев тухтӑр патӗнҫен таварӑнсан тепӗр кунне ирхине амӑшӗ ҫирлӗ аҫине Вассіан схимонах шӑтӑкне илсе пынӑ, унта схимонахӑн тупӑкӗ схимонахшӑн панихида тутарнӑ: унӑн тупӑкӗ патӗнҫен йывӑҫҫӑвӗпе хӑйӑр илнӗ те, ҫирлӗ аҫа хӑйне ҫавсемпе емелле пуҫласан, ҫас ҫӳрекен пулнӑ, сывмарӗнҫен тӳрлене пуҫланӑ. Амӑшӗ Вассіан схимонахшӑн тата панихида тутарнӑ; ҫавнӑ хыҫҫӑн унӑн ывӑлӗ вара пӗтӗмпех сывалнӑ. Унӑн ашшӗ-амӑшӗ те, тухтӑр та, ӑна пӗлекенсем те пур те пит тӗлӗннӗ, мӗншӗн тесен вӗсем ӑна вилӗм вырӑнӗ ҫинҫе пекех курса тӑнӑ, тата унтан хӑйӗнҫен те тӳсме ҫук усал щӑршӑ кӗрсе тӑнӑ. Халӗ ӗнтӗ, схимонах тупӑкӗ патӗнҫе кӗл-тунӑ хыҫҫӑн, пур те

вăл сыввине, ашшĕ-амăшĕпе хирте ĕçленине курсапĕлсе тăраççĕ ăна. 1902-мĕш çулта çак ђиртен сывалнă ађа слесарă ĕçне ĕçлеме тытăннă. 1903-мĕш çулта, пуш уйăхĕнђе вăл Мускавпа Хусан хушшинђи ђукăн çул çине, Улатăрти мастерскойа слесаре кĕнĕ; унта кĕнĕ ђухне ăна сывлăхее тухтăр пит хытă тĕпђесе пăхса илнĕ. Вăл ĕнтĕ Турă мухтавĕпе халĕ ĕçлет, Турра йурăхлă пулнă Вассіан схимонаха тав-тăваť.— Çакăнта çырнă ђир ĕçĕ çинђен, хам çав ђиртен сывални çинђен хам алă пусса ĕнентеретĕп: Улатăр хули мѣщанĕ Александр Макаров Спиридонов. Унăн ашшĕпе амăшĕ Макар Семенов Спиридоновпа Анна Васильева Спиридонова хут пĕлменрен вĕсемпĕн те, хам курнине каласа ĕнентерсе те алă пусатăп: Улатăр хули мѣщан хĕрĕ Марія Өедорова Спиридонова. 1903-мĕш çулта, çурла-уйăхин 21-мĕш кунĕнђе, ĕнентерсе калатăп: çак епĕ Христосăн таса ўђĕпе йунне темиçе хут та сыптарнă мѣщан çынни Александр Макаров Спиридонов ђаххуткапа ђирлĕ-ђĕ, унăн пĕлтĕр ђиртен ђĕрĕлесси пĕр шанђăк та çук-ђĕ, ăна пĕр Турă хăвађĕ анђах ђĕртрĕ: священник Іоанн Соколов.

1902-мĕш çулта Улатăр мѣщанĕ Александр Макаров Спиридонов ўпкине йун тулнă ђир тĕлĕшĕпе канаш ыйтма пĕрре ман патма пыђĕ. Халĕ вăл сывă. И. Н. Чистяков.

## VII.

### Вассіан схимонах Пераскева Ивановна Саченкована кăтартнă хăватпа вăл ăна курăнни.

Ђĕмпĕр кĕђпĕрни, Ăртатуав уйасĕ, Атяшево вулăсĕ, Пысăк (Аслă) Монадыш сали арăмĕ Пераскева Иванова Соченкова Улатăр хулинђе пурăнаť, вăл упăшкалă

арӑм, 48 ҫулта, ҫавӑ ак ҫак ӗҫ ҫинҫен каласа кӑтартрӗ: 1902-мӗш ҫулта, Ҫӑн таса Турӑ Амӑшне ырӑ хыпар каланӑ праҫник кунӗ, Виҫ-Ипостаҫлӗ Турӑ монастырӗнҫен ирхи апат кӗллинҫен тавӑрӑнсан, ҫак арӑм йашка-ҫӑкӑр хатӗрле пуҫланӑ; унтан вӑл хӑйӗн килӗнҫи ҫемйине кайранхи (поздній) апат-кӗллине ӑсатса йарсан, хӑй пӗҫҫенех йулнӑ та, кӗл-тума кӑмӑл тытнӑ. Кӗл-тунӑ вӑхӑтра, тулта ҫанталӑк ырӑ пулин те, ӑна ҫӳреҫе витӗр ҫиҫӗм йеверлӗ, куҫпа пӑхма ҫук ҫутӑ курӑннӑ. Ҫапла курӑннинҫен вӑл пӗлми пулса, урайне йӑванса кайнӑ. Унтан ӑнӗ кӗрсен, вӑл каласайман, ури-алли те, ытти те пӗр хускалайми пулса тӑнӑ. Вӑл хӑй пӑлтӑрта выртнине туйсан, хӑранипе кӑшкӑрса йанӑ, унтан ҫавӑнтах вилнӗ пек пулнӑ. Вӑл кӑшкӑрса йанине илтсе, ун патне хӑйсем патӗнҫе хӑваттирте тӑракансем Татьяна Ивановапа унӑн упӑшки Александр Григорьевич Плѣшков тухнӑ; вӗсем вӑл пӑлтӑрта выртнине курса, ӑна хӑйӗн пӳлӗмне йӑтса кӳртнӗ. Александр Григорьевич ҫавӑнтах унӑн упӑшкине ҫӗнме ҫиркӗве кайнӑ; вӗсем унӑн упӑшкипе, ывӑлӗпе килне тавӑрӑнсан, пит хӑраса ӳкнӗ: вӗсем ӑна мӗн пулнине пӗлмен, вӑл пӗтӗмпех сип-сивӗ пулнӑ, ҫавӑнпа йулашки сехет ӗнтӗ кунӑн тесе шухӑшланӑ вӗсем. Упӑшки кӑна Христосӑн таса ӳҫӗпе йунне сыптарма хисеп тунӑ. Анҫах священнике ҫӗнсе пырсан, священник ӑна нимӗнле майпа та сыптарайман: ку арӑм шав хӑснӑ, ҫавӑнпа вара сыптарма ирҫҫен хӑварнӑ. Ҫӗрле пур те ҫывӑрса кайсан, ҫак ҫирлӗ арӑм та кӑшт тӗлӗрнӗ пек пулнӑ; ҫавӑн ҫухне вӑл пӗр монаха курнӑ; ку монах ун патне икӗ аллипе тытса йывӑҫ хӗреспе кӗнӗ... Ҫак арӑм ку монаха Виҫ-Ипостаҫлӗ Турӑ монастырӗнҫи хӑй паллакан Прокопій монах тесе пӗлнӗ; вӑл унтан: мӗншӗн килтӗн есӗ? тесе ыйтнӑ.

Монах ăна калать: епĕ Прокопій мар, Вассіан схимонах, тенĕ. Унтан Вассіан схимонах унăн вырăнĕ патне пырса тăнă та, такам пĕри ҫирлĕ арăм йенелле ҫаврăнса каланă: кăна Турă ҫăкăри (просфора) парас, тенĕ. Вассіан схимонах хирĕҫ таврăнса каланă: малтан вăл Христосăн ӳҫĕпе йунне сыптăр-ха, унтан Турă ҫăкăрине Турă шывĕпе сыпса ҫитĕр, тенĕ; ҫав вăхăтрах вара ăна пĕҫĕкҫĕ кĕленҫе савăтпа Турă шывĕ панă пек пулнă. Вассіан схимонахпа тепĕри, палламанни, ҫирлĕ арăмпатĕнҫен кайа пуҫлакан, ку арăм хăйĕн муҫĕпех, тăнĕпуҫĕпех вырăнĕ ҫинҫен тăма пултарнă; ҫавăн хыҫҫăн вăл хăй туйсах, вĕсене ăсатма тăрса утса пынă. Унăн упăшки вăл пӳртре утса пынине курнă та; ку астумасĕ пулĕ тесе, ăна вырăнĕ ҫине йăтса вырттарма ывăлне тăратнă. Анҫах ҫирлĕ арăм вĕсене каланă: епĕ пĕтĕмпех ăнпа, хăнасене ăсататăп, тенĕ; унтан хăй курнине каласа панă вĕсене. Кил-йышĕсем вара пур те Турра та, Турра йурăхлă пулнă Вассіан схимонаха та тав-тунă. Вăл вăхăтра ҫĕрле пулнă-ха, ҫавăнпа пур те кайаллах ҫывăрма выртнă. Ирхине вăл, священник пырсан, ҫылăхĕсене каласа парса, Христосăн таса ӳҫĕпе йунне сыпнă. Священник кайсан, вăл ҫиме ыйтнă, ăна Турă ҫăкăрипе Турă шывĕ панă. Ҫавсене ҫисен, вăл йăлтах сывалса, ҫуртри ĕҫсене пуҫтара пуҫланă. Унăн кил-йышĕсем пур те ăна Вассіан схимонах кĕллипе сывалҫĕ тесе ĕненеҫҫĕ, вĕсем малтан та, пуринҫен ытла халĕ, инкек-синек курнă ҫух, ҫирлĕ-мĕн ҫух, хăйсене пулăшма йалан Вассіан схимонаха йăлăнса кĕлтăваҫҫĕ, ҫунĕсене ҫăласшăн та, ăна Турă умĕнҫе тăрăшма тархаслаҫҫĕ.

Ҫакăнта ҫырнă ĕҫ ҫинҫен ĕнентерсе калатăп: креҫҫен арăмĕ Параскева Иванова Соченкова хут пĕлмен-

рен, вӑл хушнипе, епӗ унӑн ывӑлӗ пусатӑп: Иван Иванов Саченков хут пӗлменрен, вӑл хӑй хушнипе, унӑн хӗрӗ алӑ пусатӑп: Пелагея Ивановна Соченкова. Ҫакӑнта ҫырнӑ ӗҫ ҫинҫен хамӑр курнине калатпӑр: Татьяна Иванова Плѣшакова, Александр Григорьев Плѣшкова, Арӑм хут пӗлмернрен епӗ алӑ пусрӑм: Александр Плѣшков.

Ҫав ӗҫ ҫинҫенех хам курнине калатӑп: Улатӑр хулинҫи Христос ҫуралнӑ праҫник ҫиркӗвин священникӗ, Соченковӑн ҫылӑхӗсене каҫаракан ашшӗ, Іоанн Цедринскій.

## VIII.

### Вассіан схимонах курӑнни. Вӑл куҫ ҫирӗнҫсн сыватни.

Улатӑрта Кіеври святой Николайӑн хӗр-арӑм монастырӗнҫе рясофор тӑхӑнакан Матрена Максимова Дуденкова йатлӑ хӗр-арӑм монах пурӑнаҭ. (Рясофор-монахсем пуҫ ҫине тӑхӑнакан сарлака ҫанӑлӑ тумтир). Вӑл хӑй 47 ҫулта; ҫак хӗр-арӑм монах ак ҫак ӗҫ ҫинҫен каласа кӑтартрӗ.

Вӑл 9 ҫулхи хӗр-аҫа ҫух ҫеҫекпе пит йывӑрасапланнӑ; ҫеҫек ҫирӗпе унӑн сылтӑм куҫӗ суккӑрланнӑ, халӗ те вӑл хӑрах куҫлӑ. Ҫапах та вӑл Турӑ унран ҫутта пӗтӗмпех хупласа илменшӗн Турра тав тунӑ: вӑл хӑрах куҫлӑ пулин те, икӗ куҫлӑ ҫухнехи пекех пурне те курнӑ. Анҫах Турӑ ун урлӑ Хӑйӗн ырӑлӑхне кӑтартасшӑн пулса, пӗр вӑхӑта унӑн тепӗр куҫне те курми тунӑ. 1902-мӗш ҫулта, ҫурла уйӑхин 1-мӗш курнӗ, монастыр ӗҫне ӗҫленӗ ҫух, ҫак Дуденкова хытӑ шӑннӑ, шӑнипе унӑн тепӗр куҫӗ те, сулахайӗ, пӗтӗмпех хупланса курми пулнӑ; вӑл вара тӗттӗм ҫӗрте пекех ларнӑ, хӑйӗн аллисене те курман. Ҫаплипе вӑл 1903-мӗш ҫулхи нурс уйӑхӗҫҫен пурӑннӑ. Ҫав вӑ-

хӑтра вӑл куҫне халӑх тыткалакан пур тӗрлӗ им-ҫампа та имлесе пӑхнӑ, анҫах нимӗн усӑ та курман, унӑн куҫӗ хытӑран хытӑ сурнӑ. Ҫун ҫирӗпе асапланакансем, ӳт ҫирӗпе хӗн куракансем нумайӗшӗ Вассіан схимонах кӗллипе сывалнине пӗлнӗ вӑл; ҫавӑнпа Вассіан схимонах шӑтӑкӗнҫе панихида тутарма пит хытӑ ӗмӗт тытнӑ вӑл, анҫах хӑй ӗмӗтленнине ҫитерме ҫасах пултарайман. 1903-мӗш ҫулта, кӑрлаҫ-уйӑхин 30-мӗш кунне хирӗҫ ҫӗрле, 3 аслӑ архіерей праҫникӗ ыран тенӗ ҫухне, тӗлӗкӗнҫе ӑна ватӑ Вассіан схимонах ак ҫапла курӑннӑ: ҫак хӗр-арӑм монах арҫын монастырӗнҫи ҫиркӗве кӗнӗ ҫух, ӑна пӗр ватӑ монах ҫӗнсе илҫӗ тет, вӑл ӑна тупӑк шӑтӑкне леҫсе хӑварма ыйтрӗ, тет. Ку ҫак ватӑ монаха шӑтӑка илсе пырсан, монах кӑна тупӑка, тата тимӗр пиҫихийе ҫуп-тума хушрӗ, тет. Хӗр-арӑм монах куҫҫулӗпе йӗрсе ҫуп-тунӑ та, ҫавӑнтах ыйхинҫен вӑраннӑ. Ирхине ҫак Дуденкова хӑй тӗлӗкне хӑйпе пӗрле пурӑнакан тепӗр хӗр-арӑм монаха каласа кӑтартнӑ; ҫавӑн хыҫҫӑн вӗсем: куҫ ҫирӗнҫен Вассіан схимонахӑн таса кӗллипе сывалма пулаҭ тесе, ӑна тархаслама пулнӑ. Пӗтӗмпех суккӑр пулнӑ Дуденкова ҫав кунах, монастырте ӗҫлесе тӑракана Марөа йатлӑ хӗре ҫавӑттарса, Вассіан схимонахӑн шӑтӑкне пынӑ; унтан Вассіан тупӑкӗпе тимӗр пиҫихине ҫуп-тунӑ та, ун умӗнҫи лампадаран йывӑҫ ҫӑвӗ илсе, куҫне сӗрнӗ. Унӑн сулахай куҫӗ сасартӑк пӑртакҫӑ кура пуҫланӑ; унтан вӑл тӗлӗкӗнҫе монаха тӑратнӑ тӗлте пӗр сӑн ӳкерҫӗкӗ курнӑ; вӑл сӑн шӑп ҫав тӗлӗкре хӑй леҫнӗ ватӑ монахӑн сӑнӗ пулнӑ. Ҫав ватӑ Вассіан схимонахӑн сӑнӗ хӑй хунӑ шӑтӑкра халӗ те ҫав вырӑнтах тӑраҭ. Куҫсӑр пулнӑ хӗр-арӑм монах Вассіан схимонахӑн лампадинҫен йывӑҫ-ҫӑвӗ илсе таварӑннӑ; ҫав ҫупа куҫне виҫӗ кунҫен сӗрсе тӑрса, унӑн куҫӗ йалтах уҫӑлнӑ, пӑ-

сӑлаҫҫенхи пекех лайӑх куракан пулнӑ. Куҫӗнҫен йӑлтах сывалсан, вӑл Вассіан схимонахшӑн панихида тутарнӑ; мӗн халиҫҫенех ӗнтӗ вӑл Турра та, Турра йурӑхлӑ пулнӑ Вассіан схимонаха та тав-туса пурӑнаҭ.

Ҫакӑнта сырнӑ ӗҫ ҫинҫен, хам ҫирӗм ҫинҫен ӗнентерсе калатӑп, рясфорный хӗр-арӑм монах Матрона Максимова Дуденкова сырv пӗлменрен вӑл хӑй ыйтнипе уншӑн епӗ алӑ пусрӑм: Кіеври Николайӑн хӗрарӑм монастырӗнҫе ӗслесе пурӑнакан Ксенія Степанова Миронова. Дуденкова ҫирӗ ҫинҫен ӗнентерсе калатӑп: малти калана монастыр пуҫлӑхӗ игуменія Лидія.

## XI.

### Вассіан схимонах курӑнни, урари хӑр-суранран сыватни.

Ҫӗмпӗр кӗпӗрни, Улатӑр хули креҫҫен хӗрӗ Наталья Ильинична Минҍева, 16 ҫулхи хӗр-аҫа ак ҫак ӗҫ ҫинҫен каласа паҫӗ:

Ҫак хӗрӗн ытлӑ хытӑ шӑннипе мӗн ҫамрӑкранпах икӗ уринҫе те шӑмӑ сурнӑ; вӑл темиҫе тӗрлӗ им-ҫампа та емеллесе пӑхнӑ, ҫӑмӑллӑхне курман; унӑн ҫирне „хӑр-суран" тенӗ. Вӑхӑҫӗ вӑхӑҫӗпе унӑн урисем ытла хытӑ сурнӑ. Вӑл Виҫ-Ипостаҫлӗ Турӑ монастырӗнҫе, уйрӑмах хисеплекен Хусанти Турӑ Амӑшӗ сӑнӗ умӗнҫе молебен тутарма асӑннӑ. Вӑхӑт иртнӗ те иртнӗ, ак хӗр хӑй асӑннине тӑвайман. 1903-мӗш ҫулта, нурсуйӑхӗ пӗтнӗ ҫух, ӑна тӗлӗкре Вассіан схимонах курӑннӑ; вӑл каланӑ: санӑн Турӑ Амӑшне молебен тутармалла, вара сывалӑн, тенӗ. Ирхине ку хӗр хӑй курнине ашшӗпе амӑшне каласа панӑ; ашшӗсем те кунӑн, пушӑмартан, ӳлӗме хӑварнӑ. Кун хыҫҫӑн вӗҫҫӗмӗш каҫ ҫак хӗр ҫав ваттах йӗрсе тӑнине кураҭ; ватӑ старик кӑна татах тепӗр хут каланӑ: мӗншӗн есӗ ху асӑннине тумастӑн? Кай та Турӑ Амӑшне молебен тутар, ман

шăтáкра панихида тугар, тата ман тупăк умне лампада çакса хур, тенĕ. Ирхине вăл çак хăй курни çинҫен каллах аппĕпе амăшне каласа кăтартнă. Аппĕпе амăшĕ вара, пĕртте вăхăт ирттермесĕр, лампада сутăн илнĕ, çўлти Патша Амăшне молебен тутарнă, лампадине те çакса хунă. Çавна тунăранпа халĕ Турă пулăшнипе çав ҫирлĕ хĕр пĕртте ура ыратат тесе каламаст. Çакăнта çырнă ĕç çинҫен хам ĕнентерсе алă пусатăп: Наталья Ильинична Минѣева. Çав ĕç çинҫенех ĕнентерсе хĕрĕн аппĕпе амăшĕ алă пусатпăр: Илья Иванов Минѣев, унăн арăмĕ Елизавета Семенова Минѣева.

## X.

### Шăнса пулнă ҫиртен сывални.

Ҫĕмпĕр кĕпĕрни, Улатăр хули мѣщан-арăмĕ Наталья Алексѣева Кузнецова, 42 çулхи çын, çак ĕç çинҫен каласа паҫĕ:

1903-мĕш çулта, утă-уйăхĕ пĕтнĕ ҫух, çак арăм вăрманта çырла пуçтарса çўренĕ; пит ĕçесси килсе, вăл хут шуртан нумай нумайах сивĕ шыв ĕçнĕ; çавăн хыççăн унăн пуçĕ çавăрăна пуçланă, пĕтĕм ўҫĕ-тирĕ ҫĕтĕренĕ. Вăл аран аран килне тавăрăннă та, килĕнҫе пит хăса пуçланă, сăмсинҫен йун кайнă. Çавăнтан пуçласа вăл вырăн çинҫех пĕр хусканаймасăр виçĕ ерне выртнă. Ҫирлесе пурăннă вăхăтра вăл нимĕн те çимен; ĕçме йалан ыйтнă, шыва пит нумай ĕçнĕ, вăл, çавăнтан пĕтĕмпе наҫарланса халсăрланса кайнă, пуçне те çĕклеймен; сăмсинҫен йун пит вăйлă кайнăран, вăл йун йухса пĕтсе вилесрен те хăранă. Çак арăм хăйне нимĕнле им-çампа та имлемессе пулса, Ту-

рӑ умĕнҫе сӑмах панӑ; вӑл: Турӑ мана хам асӑннине туманшӑн хĕн парат, епĕ Серафим монахӑн ҫĕрмен таса ӳтне пуҫҫапма Сарова кайма асӑнсаттӑм. анҫах хам асӑннине тумарӑм, тенĕ; ҫавӑнпа вӑл хӑйĕн ыратнине пĕр ӳпкелемесĕр тӳснĕ. Ӑна кӳршĕ арӑмĕ Марія Николаева Соколова пӑхнӑ; вӑл, ку арӑм ытла йывӑрланнине кура, ӑна им-ҫампа емеллеме канаш панӑ, ун валли вӑл ҫавка-пуҫĕ тийекен курӑк та путылкке ӑшне йарса лартса ĕҫме хатĕрленĕ. Соколованӑн упӑшки Кузнецована виҫĕ ҫулхи хĕр аҫипе пĕрле больницана илсе кайасшӑн пулнӑ; аҫин хĕр-аҫи вӑл Зинаида Егорова Красикова пĕр ернерепе сĕм-суккӑр ларнӑ. 1903-мĕш ҫулта, ҫурла-уйӑхин 14-мĕш кунĕ, Кузнецова хӑй ҫав тĕрлĕ йывӑр ҫирлĕ пулнӑран пит хытӑ йĕнĕ, ҫиртен сыват тесе вӑл Саровра хӑватсем тӑвакан Серафим монаха йӑлӑннӑ. Йĕрсе ҫарӑнсан вӑл кӑштӑ тĕлĕрсе кайнӑ; ҫавӑн ҫух тĕлĕк курнӑ: тĕлĕкĕнҫе кун патне виҫĕ кӑвакарҫӑн вĕҫсе пынӑ, вĕсенҫен пĕри каланӑ: Наталья! есĕ пит ҫирлĕ; хӑна им-ҫампа емеллесен, есĕ тата йывӑр пулӑн. Есĕ хӑна импе емеллемĕп тесе асӑнтӑн, ху тата больницана та кайасшӑн, тенĕ. Мĕншĕн есĕ ку тĕрлĕ хурланса йĕретĕн? тесе ыйтнӑ кӑвакарҫӑн. Ҫирлĕ арӑм каланӑ: Сарова кайса килме асӑннине тӑваймарӑм, тенĕ. Ҫакна хирĕҫ кӑвакарҫӑн каланӑ ӑна: ан йĕр! кунта ҫав Саровах! Виҫ-Ипостаҫлĕ Турӑ монастырĕнҫи шӑтӑка, сӑваплӑ пурӑннӑ Вассіан схимонах патне кай та, пуҫҫап ӑна, уншӑн панихида тутар, панихида тунӑ ҫух, унӑн лампадинҫен илсе пĕр кашӑк йывӑҫ-ҫӑвĕ сып, вара сывалӑн; ун хыҫҫӑн молебен тутар, тенĕ. Кӑвакарҫӑн калаҫса ҫарӑнсанах, ку арӑма аҫин хĕр-аҫи вӑратнӑ: вӑл ун патĕнҫе выртнӑ, йӑлтах суккӑрскер, вӑл хӑйпе кам калаҫнине курман, ҫавӑнпа ыйтнӑ вӑл: йе асатте килҫĕ-и?

тенĕ. Анҫах пӳртĕнҫе никам та пулман. Ҫавăнтах ҫак ҫирлĕ арăма пăхакан кӳршĕ арăмĕпе унăн упăшки пынă. Ҫирлĕ арăм вĕсене хăйĕн тĕлĕкне каласа кăтартнă. Ҫавăн хыҫҫăн пур те Турра тав-туса, тĕлĕкре мĕн курнине тума пулнă. 1903-мĕш ҫулта, ҫурла-уйăхин 17-мĕш кунĕ, ҫак ҫирлĕ арăм хăйĕн упăшкипе, хăй аҫин суккăр хĕр-аҫипе пĕрле пит асаппа Вассіан схимонах шăтăкне пынă, унта панихида тутарнă. Панихида вăхăтĕнҫе Кузнецова лампадаран пĕр кашăк йывăҫ-ҫăвĕ сыпнă; ҫавăн хыҫҫăнах вăл вара йăлтах сывалнă. Унтан аҫин хĕрĕ куҫĕсене те ҫав ҫупа сĕрнĕ те, унăн куҫĕсем те йăлтах уҫăлнă. Ҫав сывмар пулнă ҫынсем вара тата молебен тутарса, Турра та, таса пурăнса Турра йурана Вассіан схимонаха та тав-туса тухсан, килне пĕтĕмпех сывалса тавăраннă. Ҫакăнта ҫырнă хам ҫир ҫинҫен, епĕ унтан сывални ҫинҫен тĕрĕссине ĕнентерсе алă пусатăп: Улатăр хули мĕщанарăмĕ Наталья Алексѣева Кузнецова. Ҫавăн ҫинҫенех ĕнентерсе унăн упăшки алă пусатăп: Сергѣй Николаев Кузнецов. Улатăр хули мĕщан-арăмĕ Марія Николаева Соколова ҫыру пĕлменрен, вăл хăй ыйтнипе, уншăн алă пусатăп: Сергѣй Николаев Кузнецов.

## XI.

### Усал йерне аҫа сывални.

*Акт (ĕҫ ҫырăвĕ).*

Ҫак акта Ҫĕмпĕр кĕпĕрнинҫи, Улатăр уйасĕнҫи, Кармалейскій Гарт сали ҫиркĕвĕ ҫыннисем тунă; ун ҫине ак ҫак ĕҫ пулни ҫинҫен ҫырнă: 1903-мĕш ҫулта, ҫула, Кармалейскій Гарт ҫыннин, Василій Ерофѣев Земсковăн ывăлĕ Ултăрта Виҫ-Ипостаҫлĕ Турă монастырĕнҫе выртакан Вассіан атте шăтăкĕнҫе, унăн тупăкĕ умĕнҫе Вассіан аттешĕн виҫĕ хут панихида ту-

тарнă хыççăн, хăйĕн йывăр ҫирĕнҫен тĕлĕнмелле хăватпа сывалҫĕ. Вăл аҫа пĕр ултă ернене йахăн ҫав хăрушă ҫирĕпе асапланса пурăнҫĕ; унăн ҫирĕ, ашшĕамăшĕ калана тăрăх, нимĕнсĕрех ҫакланнă ăна. Сыпсывă ҫаҫанăн, ытла аван тăнлă пуҫлăскерĕн, малтан ăшĕ-ҫикки вăрка пуҫланă, унтан тăнĕ пĕтнĕ, вăл хăйĕн ашшĕне те паллами пулнă, кайран аскăнлă пулса ухмахлана пуҫланă; вăл акă хăйне сăнҫăрпа, йе вĕрен-тилкепепе кăкарса лартсан, хăйне ыраттарса суран тăвасшăн урайне ӳке ӳке ҫапăнаҫ-ҫĕ, ҫыххине пушатасшăн, йе йăлтах салтасшăн асапланаҫ-ҫĕ; салтма май килсен, пусса (тарасана), йе ҫырмана сикет-ҫĕ, ашшĕ ҫине те хăш ҫухне ҫĕҫĕпе тăраҫ-ҫĕ, пĕрре пуртăпа тăҫĕ. Тĕлĕнмелле тата: ҫак аҫа, Іоанн, хăй ҫирлĕ ҫухне турăшсем ҫине пĕртте ҫиленмесĕр пăхаймасҫ-ҫĕ, вĕсем ҫине мĕн килҫĕ ăна иле иле пăрахаҫ-ҫĕ; тата кĕл-туса тасатнă шыва та, Турă шыва кĕнĕ кунхи шыва та, хурăнташĕсем темĕн пек тилмĕрсе каласан та, ирĕксĕрлесен те, ĕҫмест-ҫĕ. Вассіан аттешĕн малтанхи хут панихида тутарсанах, ҫак аҫана паллах ҫăмăл пулҫĕ; иккĕмĕш хут панихида тутарсан, аҫа Христосăн таса ӳҫĕпе йунне сыпма пултарҫĕ; Вассіан аттешĕн 3-мĕш хут панихида тутарсан, аҫа вара аскăнланма йăлтах ҫарăнҫĕ. Халĕ ĕнтĕ ҫак аҫа сып-сывах, ĕлĕкхи ҫирĕнҫен йулнă паллă-мĕн нимĕн те ҫук. Ҫавăн ҫинҫен Кармалейскій Гарт ҫиркĕвĕ ҫыннисем ĕнентерсе калатпăр: священник Пантелеимон Троицкій, псаломщик Іоанн Десницкій.

Ĕнентермешкĕн монастырте тĕп акт пур.

## XII.

Ҫĕмпĕр кĕпĕрнин, Улатăр уйасин, Ждамирови сали ҫынни Иван Андреев Жирнов ак ҫак ĕҫ ҫинҫен каласа паҫĕ, вăл хăй 35 ҫулта:

1903-мӗш ҫулта ҫак Иван Жирновӑн 60 ҫула ҫитнӗ амӑшӗ, Ждамирово сали арӑмӗ Агрипина Спиридонова Жирнова шӑнса пулнӑ пит йывӑр ҭирпе асапланнӑ, ҭирӗнҭен сывалассӑн вӑл тӧмиҫе тӗрлӗ им-ҫам та илсе пӑхнӑ, анҭах усӑ пулман. Кайран унӑн сывлӑшӗ те пит хӗнпе тухнӑ, ывӑлӗ вара ӑна Христосӑн таса ӳҭӗпе йунне сыптарма хисеп тунӑ. Вӑл ҭирлӗ амӑшне Христосӑн таса ӳҭӗпе йунне сыптарсан, акӑ халӗ вилет, вара вилет, тесе кӗтсе анҭах тӑнӑ. Вӑл Вассіан схимонах кӗллипе ҭирлӗ ҫынсем тӗлӗнмелле сываласҫӗ тенине илтнӗ те, ҫавӑн хыҫҫӑн пӗтӗмпех Турӑ ҫине шанса, килӗнҭе турӑшсен умне тӑрса кӗл-тума тытӑннӑ, амӑшӗ сывлӑхӗшӗн Турӑ умен ҭе хута кӗме Вассіан схимонаха пӗтӗм ӑшӗ кӑмӑлӗнҭен ӗненсе, йӗре йӗре йӑлӑннӑ; Вассіан схимонах пулӑшса, амӑшне самай пулас пулсан, вӑл йури монастыре кайса, Вассіан аттешӗн панихида тутарма асӑннӑ.—Мӗн тесе пӗлен?!—Унӑн амӑшӗ ҫав каҫах сывалнӑ; ирхине ывӑлӗ курнӑ ҭух, вӑл пӗтӗмпех сып-сывӑ, нихӑҫан пекех ҫӳренӗ. Унӑн ывӑлӗ авӑн-уйӑхин 14-мӗш кунӗнҭе Улатӑра Виҫ-Ипастаҫлӗ Турӑ монастырне кайса, Вассіан схимонах тупӑкӗ умӗнҭе панихида тутарса, Вассіан аттене йӗре йӗре тав-тунӑ; амӑшне сыватнине асра тытса, ӑна хӑйне мухтаса тӑмашкӑн тесе, унтан унӑн сӑнне илнӗ. Килне тухса кайас умӗн монастыре кӗрсе Вассіан схимонахшӑн тата панихида тутарнӑ, хӑйӗн амӑшӗ ҭиртен сывалнине каласа кӑтартса, Турра та, Турра йуранӑ ватӑ Вассіан схимонаха та тав-тунӑ.

Ҫакӑнта ҫырнӑ ӗҫ ҫинҭен ӗнентерсе калатӑп: Ждамирово сали арӑмӗ Агрипина Спиридонова ҫыру пӗлменрен уншӑн, вӑл хӑй хушнипе, унӑн ывӑлӗ Иван Андреев Жирнов алӑ пусрӑм.

## XIII.

### Шăнса ҫире кайнинҫен сывални.

Ҫĕмпĕр кĕпĕрни, Улатăр хули мĕщан-арăмĕ Анна Васильева Свистунова, 49 ҫулхи ҫын, ҫак ĕҫ ҫинҫен каласа паҫĕ:

1903-мĕш ҫулта, авăн-уйăхин малтанхи кунĕсенҫе, ҫак арăм вăрманта мăк кăларнă ҫух пит хытă шăннă. Килне тавăрăнсан унăн ҫăтнă ҫух пырĕ ыратнă, унтан пĕртте ҫиме те, ĕҫме те йурами пулнă, вунă кун хушши калаҫайман та вăл. Пырĕ ăшĕ шыҫнă, ҫăварне мăклĕ сиксе тухнă. Ҫапла ытла йывăр ҫирлесе кайсан, вăл, хăйĕн сывăх ҫыннисем канаш панипе, им-ҫампа имлесе пăхасшăн пулнă; анҫах Вассіан схимонах кĕллине ĕненсе, вăл уншăн панихида тутарма асăннă. Ҫавăнтах унăн шыв ĕҫесси килнĕ. Ҫăварне шыв сыпнă та, вăл сасартăк ҫăварĕнҫи мăкли шăтнине сиснĕ, вара ăна ҫавăнтах ҫăмăллăн туйăнса кайнă. Ирхине Вассіан схимонахăн шăтăкне пырса панихида тутарнă та, ҫавăнта вăл пĕтĕмпех сывă ҫын пулса тăнă. Ҫавăн хыҫҫăн тата молебен тутарса, Турра та, таса пурăннă вата Вассіан схимонаха та тав-тунă.

Ҫакăнта ҫырнă ĕҫ ҫинҫен ĕнентерсе калатăп: Улатăр хули мĕщан-арăмĕ Анна Васильева Свистунова ҫыру пĕлменрен уншăн хăй ыйтнипе алă пусатăп: Ҫĕмпĕр мĕщанĕ Василій Петров Крживицкій.

## XIV.

### Туйми туса пăрахнă ҫиртен (параличран) сывални.

1903-мĕш ҫулта, йупа-уйăхин 14-мĕш кунĕнҫе.

Хусан кĕпĕрни, Спас уйасĕ, Елке вулăсĕ, Вăта ҫĕрти Питтимĕрсем Ҫĕмпĕр кĕпĕрнинҫе, Улатăр хулинҫе пĕр вăхăта пурăнакан 45 ҫулхи ҫын Иван Өаддеев Ку-

лагин ак ҫак ӗҫ ҫинҭен каласа паҭӗ: вӑл ҫак 1903-мӗш ҫулта, ака-уйӑхӗнҭен пуҫласа йупа-уйӑхне ҫитиҭҫен туӥми туса пӑрахнӑ ҭирпе ҭирленӗ те, унӑн сылтӑм аллипе сылтӑм ури пӗрре тӗ туйман: аллипе нимӗн ҫӗклеме те, йӗ тытса тӑма та пултарайман, ури ҫинҭе тӑрайман. Ҭирне емеллемешкӗн, ҭирӗ тӗлӗшӗшӗнҭен канаш ыйтмашкӑн, вӑл Самар хулинҭе земскій больницана ҫӳренӗ, унта уйӑх-ҫурӑ выртса та пӑхнӑ. Тухтӑрсем каланипе унӑн ҭирӗ тӳрленми ҭир пулнӑ; ҫавӑнпа вӑл пит пӑшӑрханса больницаран тухмалла пулнӑ. Ҫапла хуйхӑлӑ пурӑннӑ ҭух, вӑл йупа-уйӑхин 9-мӗш кунӗ ҫӗрле тӗлӗкӗнҭе пӗр ватта курнӑ; ҫак ватӑ ҫын ӑна Виҫ-Ипостаҫлӗ Турӑ монастырне кайса, Вассіан схимонахӑн шӑтӑкӗнҭе Вассіан аттешӗн панихида тутарса килме хушнӑ. „Вассіан атте нумайӗшне ҭиршен савашнипе епӗ ӗлӗк те илтнӗ ҭӗ, ҫавӑнпа епӗ хам тӗлӗке ӗнентӗм Йупа уйӑхин 10-мӗш кунӗ епӗ Виҫ-Ипостаҫлӗ Турӑ монастырне пытӑм. Вассіан аттен тимӗр пиҫихине хам ҫине хурса, уншӑн панихида тутартӑм; панихида хыҫҫӑн ҫавӑлтех хама ҫӑмӑлтарах пулнине сисрӗм; епӗ вара монастыртен хам хӑваттере ҫуранах ҫитрӗм; 12-мӗш числара, никам пулӑшмасӑр, пӗр хам пӗҭҭенех Вассіан схимонах патне ҫуран кайрӑм, унта унӑн тимӗр пиҫиххине хам ҫине тепӗр хут хурсан, мана тата ҫӑмӑлтарах пулҭӗ. Йупа-уйӑхин 14-мӗш кунӗнҭе Виҫ-Ипостаҫлӗ Турӑ монастырне виҫҫӗмӗш хут кайрӑм; Турра тав-туса, Вассіан аттен тимӗр пиҫиххине хам ҫине хурса, тата уншӑн панихида тутартӑм. Халӗ ӗнтӗ епӗ сывӑ; ҭиртен сывалнине епӗ Вассіан атте кӗллипе пулҭӗ тесе ӗненетӗп. Ҫавӑнпа тӳрӗ кӑмӑлтан алӑ пусатӑп: креҫҭен ҫынни Иван Кулагин. Иван Кулагин хут пӗлменрен, епӗ ӑна ҭирлӗ ҭухнехине пӗлекен, мӗн пӗлнине каласа па-

ма пултаракан вăл хăй ыйтнипе алă пусатăп: Улатăр хули креçӟенĕ Степан Егоров Антюшев. Хусан кĕпĕрни, Спас уйасĕ, Елкел вулăсĕ, Вăта çĕрти Питтимĕр креçӟенĕ Улатăр хулинӟе манăн прихут сынни пулакан хăйĕн хĕрĕ патĕнӟе пурăнакан Иван Өадеев Кулагин патне епĕ ӟăн кайрăм, унăн çылăхĕсене ыйтрăм, ăна Христосăн таса ӳӟĕпе йунне сыптартăм, вăл хăйĕн паралич тийекен ӟирĕнӟен сывалнине ĕнентерсе калатăп: Улатăр хулинӟен Знаменскій ӟиркӳ священникĕ Михаил Никифоров. Епĕ, Улатăр хулинӟи Знаменскій ӟиркӳ діаконĕ Василій Николаев Ягодинскій ĕнентерсе калатăп: Хусан кĕпĕрни, Спас уйасĕ, Елкел вулăсĕ, Вăта çĕрти Питтимĕр креçӟенĕ Иван Өаддеев Кулагин паралич тийекен ӟирпе ӟăн ӟирлĕӟĕ, халĕ вăл çав ӟиртен сывалнă. Хам мĕн калани тĕрĕссине ĕнентерсе алă пусатăп: Улатăрти Знаменскій ӟиркӳ діаконĕ Василій Ягодинскій.

## XV.

1903-мĕш çулта, йупа-уйăхин 26-мĕш кунĕнӟе, Улатăр хули мѣщан-арăмĕ Ольга Алексѣева Авдіева-Кокуйская çак ĕç çинӟен каласа кăтартрĕ: вăл 15 çул ӟĕре сикнипе асапланса пурăннă. Çав 15 çул хушшинӟе вăл темиçе тĕрлĕ тухтăр патне те çӳренĕ, земскій больницăра та выртнă; çак больницăри Иванов тухтăр ăна: санăн ӟирне тӳрлэтме çук, тесе каласа панă. Больницăра вăл нимĕн ӟухлĕ те самайланайман. Унтан тухсан, 1899-мĕш çултан пуçласа, ӟукăн çул çинӟи Чистяков тухтăр патне çӳре пуçланă. Чистяков тухтăра вăл темиçе хут та хăй килне иле иле пынă; кайран кайран вăл та унăн ӟирне: ку тӳрленми ӟир, пушăран пушă пулса пыракан йапала, тенĕ. Çапла ниăçта хуйхине пусараймасăр, çак арăм, Какуйская, ӟиртен

сыват тесе, Вассіан схимонах аттене тархасласа кӗлтӑва пуҫланӑ. Пӑртакҫӑ пурӑнсан, вӑл шанми пулнӑ: Вассіан атте ҫапа тухман халӗ, ӑна кӗл-туса ҫылӑха кӗместӗп-ши епӗ, тесе шухӑшланӑ; ҫавӑнпа ӑна кӗлтума ҫарӑннӑ вӑл. 1903 - мӗш ҫулта, йупа уйӑхин 6-мӗш кунне хирӗҫ, вӑл, ҫирпе минкелсе пӗтсе ывӑннӑскер, ҫывӑрса кайнӑ; ҫывӑрнӑ ҫух тӗлӗк курнӑ: вӗсем патне пӗр ватӑ ҫын, монах тумтирӗ тӑхӑннӑскер, туйапа пырса кӗҫӗ пек тет; вӑл малалла иртсе тӗпелти кӗтессе ларҫӗ пек тет те, каларӗ тет: акӑ сирӗн пата Вассіан атте килҫӗ, терӗ тет. Унтан вӑл ҫак ҫирлӗ арӑм ҫине хайаррӑн пӑхса каларӗ тет: мӗншӗн есӗ ҫӳреместӗн? терӗ тет; вӑл тата темӗскер темӗскер нумай каларӗ тет те, анҫах ҫирлӗ арӑм маннӑ. Унтан пӳртӗнҫен тухса кайнӑ ҫух, каларӗ тет: асту, пыр ӗнтӗ, терӗ тет. Ҫирлӗ арӑм вара ыйхинҫен вӑраннӑ, вӑрансан хӑйӗн тӗлӗкне килтисене каласа кӑтартнӑ, Ҫав 6-мӗш числара вӑл Виҫ-Ипостаҫлӗ Турӑ монастырне кайнӑ, унта Вассіан аттешӗн панихида тутарнӑ, тата Вассіан атте тупӑкӗ патне 40 кунҫен ҫӳреме асӑннӑ; унтан тупӑк умӗнҫе ҫунса тӑракан лампадаран йывӑҫ ҫӑвӗ илнӗ. Вӑл 2-мӗш, 3-мӗш кунне те панихида тутарнӑ; 3-мӗш панихидине тутарнӑ хыҫҫӑн, ӑна Вассіан атте ломпадинҫен йывӑҫҫӑвӗ илсе ӗҫтернӗ. Ҫав ҫӑва ӗҫсенех, ҫирлӗ арӑм хӑйне ҫӑмӑл пулнине туйнӑ: халӗ ӗнтӗ вӑл пӗтӗмпех сывӑ.

Анне Ольга Алексѣева хушнипе епӗ унӑн хӗрӗ алӑ пусрӑм: Наталья Авдѣева.

Ӗпӗ, Ӑртату уйасӗ, Кулясово сали священникӗ, Ольга Алексѣевапа, (Авдѣевпа) пӗр-тӑванӑн ывӑлӗ, Михаил Смѣловскій ӗнентерсе калатӑп: Ольга Какуйская нумайҫҫен сывмар пулса, им-ҫам илсе пурӑнҫӗ, анҫах тухтӑрсем ӑна тӳрлетеймерӗҫ, ҫавӑн ҫинҫен ӗнентерсе калатӑп: священник Михаил Смѣловскій.

## XVI.

Сергійён Улатӑрти Виҫ-Ипостаҫлӗ Турӑ монастырӗнҭи Высокопреподобій архимандрит аттене Гавріила.

Алова салинҭи Михаил-архангел ҭиркӗвӗ священникӗнҭен Матфей Зерновран хыпарлӑ хут (заявленіе).

Манӑн прихутри Алова сали креҫҭен-арӑмӗ Агрипина Филиппова Козлова килсе сӑмахпа каласа кӑтартрӗ мана: унӑн Елена йатлӑ хӗрин ури хутланса кӗнӗ, вӑл унпа 13 ҫул асапланнӑ; ҫак арӑм хӗрин ҭирӗ тӗлӗшӗпе, Вассіан схимонах кӗлли хӑватлине ӗненнӗ хастарпа 1903-мӗш ҫулта, ҭӳк-уйӑхин 6-мӗш кунӗнҭе хӑйӗн сывмар хӗрӗпе Виҫ-Ипостаҫлӗ Турӑ монастырне пынӑ, унта Вассіан атте канлӗхлӗ выртакан шӑтӑка кӗрсе Ҫӳлти Патша Амӑшне молебен тутарнӑ, тата сарӑмсӑр пурӑннӑ Вассіан атте ҭунӗ канлӗхе кӗтӗр тесс, уншӑн панихида тутарнӑ; панихидара вӑл хӗрин сывлӑхӗшӗн Турӑ Амӑшне тӑрӑшса кӗл тума Вассіан аттене йӑлӑннӑ. Таса пурӑннӑ Вассіан схимонах кӗллине, амӑшӗ те хӗрӗшӗн ҭунтан тӑрӑшса кӗл-тунине Ҫӳлти Турӑ Амӑшӗ илтнӗ: Агрипина Козлован хӗрӗ ҫавӑлте Вассіан атте шӑтӑкӗнҭе ҭухах ури сурни лӑпланнине сиснӗ, виҫӗ кунтан унӑн суранӗ йӑлтах тӳрленнӗ. Суракан ури ҫине малтан вӑл пусайман та, килне таварӑнсан утса ҫӳреме те пултарнӑ; виҫӗ кунтан вӑл ури ҭирӗнҭен йӑлтах сывалнӑ. Унпа пӗр йал ҫыннисем ӗнентерсе каласа тӑраҫҫӗ: Илья Козлов, Алексѣй Евсигнѣев, Андрей Трофимов Оленин.

Ҫак Вассіан схимонах кӗллипе пулнӑ тӗлӗнмелле хӑват ҫинҭен епӗ, священник, сире, Высокопреподобіене, хыпар ҫитерме хисеп турӑм. Тата хушса калатӑп: ури ҭирӗнҭен сывалнӑ хыҫҫӑн епӗ ҫак хӗре ҭас килне кайса пӑхрӑм, ун ҭухне куртӑм, вӑл ирӗккӗн ҫӳрет-ҭӗ.

Священник Матѳей Зернов. 1904-мӗш ҫулта, кӑрлаҫ-уйӑхин 15-мӗш кунӗ ҫиркӳ пиҫетне пуснӑ. Хыпар ҫитерне тӗп хут монастырте тӑраҭ.

## XVII.

### Ӑш вӗриленсе ыратнӑ ҫиртен сывални.

1903-мӗш ҫулта, ҫӳк-уйӑхин 16-мӗш кунӗ, Улатӑр уйасӗ, Иҫҫикӑс сали арӑмӗ Зиновія Сергѣева Романова Улатӑрта пурӑнаҭ, вӑл хӑй 25 ҫулта; ҫав арӑм ак ҫак ӗҫ ҫинҫен каласа кӑтартрӗ: вӑл ӑш ыратакан ҫирпе темиҫе ҫул асапланнӑ, нимӗнле ҫимӗҫ те ҫиме йураман ӑна. Вӑл хамӑрти тухтӑрсем патне ҫӳресе пӑхнӑ, Хусана та Катовщиков профессор патне хӑйӗн ҫирӗ ҫинҫен канаш ыйтма кайнӑ; професcер унӑн ҫирне „ӑш вӗрлинсе ыратакан ҫир" тенӗ. Им-ҫам таврашӗ ҫак ҫирлӗ арӑма пулӑшман. Кӑҫал 1903-мӗш ҫулта, ҫурла уйӑхин 12-мӗш кунӗ, ҫак ҫирлӗ арӑм Виҫ-Ипостаҫлӗ Турӑ монастырне килнӗ те, Ҫӑлакан Турра ҫунтан-вартан кӗл-тунӑ, хӑйӗн сывлӑхӗшӗн Васcіан схимонаха тархасласа йӑлӑннӑ. Унтан унӑшӑн панихида тутарнӑ та, ҫак ҫирлӗ арӑм хӑйне самай пек пулнине сиснӗ. Ҫирӗ ҫапла майа кӑйнӑшӑн савӑннипе вӑл тепӗр хут панихида тутарнӑ; халӗ ӗнтӗ унӑн ӑшӗ пӗрре те ыратмаҭ, тет.

Ҫӑн тӗрӗс иккенне ӗнентерсе хал алӑ пусатӑп: Улатӑр уйасӗ, Иҫҫикӑс сали арӑмӗ Зиновія Сергѣева Романова.

## XVIII.

1904-мӗш ҫулта, кӑрлаҫ-уйӑхин 8-мӗш кунӗнҫе.

Алово йалӗ креҫҫен ҫыннин Косма Дерешкинӑн 5 ҫулхи ывӑл-аҫин 1903-мӗш ҫулта, йупа-уйӑхин пуҫ-

ламăшĕнҫе пĕтĕм пуçне, питне пĕр вĕçĕмрен лапкипе пӳрлĕ кĕсен пусса илнĕ, çавăнтан вăл пит ҫирлесе пурăннă, пуçĕ ыратнипе, пĕтĕм ăшĕ-ҫикки сурнипе асапланнă; им-çам йапали нимĕн ҫухлĕ те пулăшман ăна. Çак аҫан ашшĕ, хăй каланă тăрăх, Улатăрта Виç-Ипостаçлĕ Турă монастырĕнҫе шăтăкра выртакан Вассіан схимонах нумайĕшне ҫиртен сыватаť тенине илтнĕ; 1903-мĕш çулта, раштав уйăхин 12-мĕш кунĕ вăл хăйĕн ҫирлĕ аҫипе Виç-Ипостаçлĕ Турă монастырне кайнă; унта Вассіан аттен тупăкĕпатĕнҫе вăл пулăшассине ҫунĕнҫенварĕнҫен ĕненсе, Христос çыннисене пулăшса тăракан Турă Амăшне молебен тутарнă, Вассіан схимонах канлĕхе кĕтĕр тесе, уншăн панихида тутарса, хăй ывăлин сывлăхĕшĕн кĕл-тунă. Çавăн хыççăн ун ывăлин ҫирĕ пĕр темиçе кунтанах пĕтĕмпех иртнĕ. „Ҫирĕ çинҫен те, вăл ҫиртен ывăлăм йепле сывални çинҫен те хампа пĕр йалсем—хурăнташсем—каласа ĕнентереççĕ: Иванпа ПрокопійДерешкинсем.“ Çак ҫиртен сывалнă ĕç çинҫен ĕнентерсе каланине Алово сали священникĕнҫен Матеей Зерновран 1904-мĕш çулта, нарс уйăхĕнҫе 2-мĕш кун çырнă 12 №-лĕ хут илнĕ, вăл хут Улатăрти Виç-Ипостаçлĕ Турă монастырĕнҫе тăраť.

## XIX.

### Ҫĕре сийенĕнҫен сывални.

1904-мĕш çулта, нарс-уйăхин 28-мĕш кунĕ, Ҫĕмпĕр кĕпĕрни, Улатăр уйасĕ, Ҫăварли сали кресҫенарăмĕ Евдокія Михайлова Шишова ак çак ĕç çинҫен каласа паҫĕ: вăл 15 çула йахăн ҫĕри сийенĕпе асапланнă; темиçе хут та тухтăрсем патне кайнă, анҫах уссине курман Улатăрта Виç-Ипостаçлĕ Турă монастырĕнҫе Вассіан схимонаха хăйĕн тупăкĕ патĕнҫе кĕлтунипе нумайĕшĕ ҫиртен сывалассĕ тенине илтсе, вăл

çавăлте кайса килме ĕмĕт тытнă. Ăна çуран çӳреме пĕртте йураман, çавăнпа нарс-уйăхин 19-мĕш кунĕнҫе ăна Виç-Ипостаçлĕ Турă монастырне лашапа илсе пынă. Вăл Вассіан схимонах выртакан шăтăка пырса уншăн панихида тутарнă та, çавăнтах çăмăллăн туйăнса кайнă ăна. Çавăн хыççăн вăл монастыртен Ҫăварлийе кайалла таварăннă ҫух çурнах пĕр асапланмасăр утса çитнĕ. Ҫăварли сали Улатăртан 7 çухрăмра вăл. Халĕ ĕнтĕ çав арăм сып-сывах. Ҫăварли сали арăмĕ Евдокія Михайлова Шилова çыру пĕлменрен, вăл хăй ыйтнипе, уншăн алă пусатăп: Улатăрта Виç-Ипостаçлĕ Турă монастырĕнҫе ĕçлесе тăракан Иван Красильников.

## XX.

### Нервсем ҫирлинҫен сывални.

1904-мĕш çулта, пуш-уйăхин 7-мĕш кунĕ, Улатăр мĕщанĕ Михаил Васильев Кикин, 65 çулхи старик, çак ĕç çинҫен каласа паҫĕ: çак старик нервсем ҫирлипе 10 çул асапланнă. Çав вунă çул хушшинҫе вăл хăйĕн ҫирĕ çинҫен канаш ыйтма тесе тĕрлĕ тухтăрсам патне, профессорсем патне Хусана та, Мускава та кайа кайа килнĕ, анҫах унăн ҫирне вĕсем: ку тӳрленми ҫир, тенĕ. Профессорсем çапла унăн ҫирне емелleme тытăнман та, кунăн вара пулăшу ырама урăх ниăçта кайма та пулман. 1902-мĕш çулта, çурла-уйăхĕ пуçламăшĕнҫе çак ҫирлĕ çын Виç-Ипостаçлĕ Турă монастырне пырса, Вассіан схимонах выртакан шăтăкра, Вассіан аттешĕн панихида тутарнă, ăна вăл темиçе хут çапла малалла та панихида тутарнă. Çурла-уйăхне пурăннă ҫух унăн ҫирĕ самайланнă; тата вăл Вассіан аттен ҫупăкĕ умĕнҫе çунса тăракан лампадари йывăççăвне те илсе ĕçсе пурăннă; çапла майка çурла-уйăхĕ

пĕтнĕ ђух, унăн ђирĕ йалтах иртнĕ, халĕ ĕнтĕ вăл сып-сывах, нимĕн ыратнине каламасť. Тата унăн 5 çулхи Иван йатлă ывăл-ађин нумайђђен хăлхисем сурнă: вĕсенђен йалан темĕнле пўр йухса тăнă; вăл ђир пирки вĕсем тухтăрсем патне те çўренĕ, анђах им-çамран нимĕн сиплĕх те пулман. Вассіан ;атте лампадинђен йывăç-çăвĕ илсе, тата унăн тупăкĕ çинђен çĕрмамăкĕ илсе, йывăç-çăвне сĕрнĕ, çĕр-мамăкне хăлхи шăтăкĕсене ђикнĕ; çавăн хыççăн ђасах хăлха ђирĕ те пĕтĕмпех иртнĕ, халĕ ĕнтĕ вăл ђирĕн палли те çук.

Ђăн тĕрĕс кăмăлтан хам алă пусатăп: Михаил Васильев Кикин.

## XXI.

Улатăрти Виç Ипостаçлĕ Турă монастырĕнђи пуçлăх-монаха архимандрит аттене.

Улатăр уйасĕ, Алово сали, Михаил-архангел ђиркĕвĕ священникĕнђен Матфей Зерновран хыпарлă хут.

1904-мĕш çулта, çăв-уйăхин 15-мĕш кунĕнђе манăн прихут çынни, Алово сали креçђенĕ Павел Кудашкин 3 çулђђен пит асаплă сивĕ ђирпе пулнă. Вăл темиçе тухтăр патне те çитнĕ, анђах тухтăрсем çырса панă им-çамсенђен ăна нимĕн усă та пулман. Вăл Улатăрти Виç-Ипостаçлĕ Турă монастырне ;кĕлле çўренĕ çынсенђен сăвапшăн тăрăшса пурăннă Вассіан схимонах кĕллипе ђирлĕ çынсем нумайĕшĕ сывалаççĕ тенине илтнĕ; çак мĕскĕн ђирлĕ çын Вассіан атте кĕлли хăватлине, вăл Турă Амăшĕ умĕнђе ђирлĕ çынсемшĕн тăрăшса хута кĕнине ĕненнĕ хастарĕпе унăн шăтăкне виçĕ хут пынă, виçĕ хут Турă Амăшне молебен тутарнă Вассіан схимонахшăн виçĕ хут панихида тутарнă, унăн тупăкĕ патĕнђи лампадаран пăртакçă йывăç-çăвĕ илсе сыпнă. Çавăн хыççăн нумай та вăхăт иртмен, вăл хăй

ҫирӗнҫен пӗтӗмпех сывалнӑ; ҫирӗнҫен ҫапла сывал, нине вӑл пӗтӗмпех сӑвапшӑн тӑрӑшса пурӑннӑ Вассіан схимонах кӗллипе, вӑл тӑрӑшнипе пулҫӗ тесе ӗненет.

Кресҫен ҫынни Павел Кудашкин ҫирӗнҫен ҫапла сывални ҫинҫен сире высокопреподобіене хыпар ҫитерме хам тунӑ тивӗҫлӗ таса ӗҫ вырӑнне хуратӑп. Алово сали священникӗ Матеей Зернов.

Ҫакӑнта тата сире, высокопреподобіене, ак ҫакна калама хисеп тӑватӑп: креҫҫен ҫынни Кудашкин ҫапла тӗлӗнмелле хӑватпа сывалкине манран пуҫне тата унӑн кӳршисем те пур те пӗлеҫҫӗ. Алово сали священникӗ Матеей Зернов.

## XXII.

**Улатӑр хулинҫе, Святой Виҫ-Ипостаҫлӗ Турӑ монастырӗнҫе Турра йурӑхлӑ пулнӑ Вассіан схимонах выртакан ҫиркӳ ӑшша кайнӑ ҫӗртен ҫӑлӑнса йулни.**

Улатӑрта, Святой Виҫ-Ипостаҫлӗ Турӑ монастырӗнҫе Вассіан схимонахӑн тупӑкне хунӑ шӑтӑк синҫи ҫиркӳ 1906-мӗш ҫулта, утӑ-уйӑхин 4-мӗш кунӗнҫе пулнӑ вӑйлӑ пушартан ҫак Туррӑ йурӑхлӑ схимонах кӗлтуса пурӑннипе ҫӑлӑнса йулҫӗ.

Ку ӗҫ ак ҫапла пулҫӗ. Кӑнтӑрла иртсен пӗр сехет тӗлӗнҫе Улатӑр хулинҫе вут тухрӗ, вӑл монастыртен инҫе-ҫӗ. Ун ҫухне ҫил вӑйлӑ-ҫӗ; ҫавӑнпа монастыре хуралҫӗсем патнелле вут ҫас ҫитрӗ, монастыре пӗр самантра темиҫе тӗлтен йарса илҫӗ. Ҫи малтан хӗлле кӗрекен святой Сергій моиах ҫиркӗвӗпе монастыр картишӗнҫи хуралтӑсем ҫуна пуҫларӗҫ; унтан пуҫлӑх-монахпа ытти монахсем те пурӑнакан уйӑрӑм уйӑрӑм лартнӑ ҫуртсемпе хӗлле кӗрекен ҫиркӳ ҫумӗнҫи, Хусанти Турӑ Амӑшӗ сӑнӗ йаҫӗпе тунӑ ҫиркӳ ҫуна пуҫларӗ. Вӗсен хыҫҫӑн ҫулахи соборпа унӑн ҫансем

çакнă пайĕ çуна пуçларĕ, çапла пĕтĕм монастыре вут йарса илҫĕ. Вут çав тĕрлĕ хăвăрт йарса илнипе, çав тĕрлĕ çил вăйлă пулнипе, вут хĕлхемĕсемпе тĕтĕм вăйлă çилпе пĕлĕт пек, пĕлĕт пек çĕклене çĕклене иртнĕ çĕрте вутран мĕн та пулин хăварма нимĕн май та пулмарĕ. Анҫах çавăлтех, хĕлле кĕрекен ҫиркӳ çумне, Хусанти Турă Амăшĕ сăнĕ йаҫĕпе тунă ҫиркӳ айĕнҫи, айалти хутри ҫиркӳ, Вассіан схимонах кĕл-туса пурăннăшăн, Турă ырăлăхĕпе, вутран пĕр сийенленмесĕр хăтăлса йулҫĕ. Çак ҫиркӳ тĕлĕнҫе çӳлте те, унăн йĕри-тавра-шĕнҫе те вут çулăмĕ тинĕсри шыв пек йавăнса тăҫĕ: ҫиркĕве анмалли пусма çуннă, ҫиркĕве кĕмелли алăк та ҫул çтана ăшне кӳртсе лартнă йанахĕ-мĕнĕсемпех çуннă; сывлăш туртма тунă çӳлти икĕ шăтăкран, айала, йывăç хăма сарнă урайне çунакан кăвар муклашкисем ӳкнĕ, кăвар ӳкнĕ тĕлти урайне вут тивнĕ, унти йывăç хăмасем кăмрăкланса кайнă. Пĕтĕм ҫиркĕве тĕтĕм тулнă-ҫĕ. Тĕтĕм мăкăрланса тăнипе, ытла вĕри пулнипе унта нимĕн майпа та кĕме пулмарĕ. Кирпĕҫрен тунă çавраҡа маҫҫа (свод) айĕнҫи тимĕр каштасем вĕрипе аванса ан анҫăр тесе, монастыр экономĕ, ыттисем те çавăлте пулăшса тăнă çĕрте, ҫиркӳ ҫӳреҫинҫен нассуспа шыв сапса тăҫĕ; анҫах çавăнта, канлĕхлĕ выртакан ырă асăнма тивĕçлĕ Вассіан схимонаха пула, Турă хăваҫĕ пулман пулсан, ҫиркĕве çавă хĕрхенсе хăтарман пулсан, тинĕсри шыв пек йавăнса тăнă вут çулăмĕ ăшĕнҫе нассуспа сапса тăнă пăртакçă шыв мĕн тума пултарĕ-ҫĕ?

Пушар çĕрле тин лăпланҫĕ. Тепĕр кунне монастырти пуçлăх-монах, архимандрит Гавріил, ытти хăш хăш монахсемпе пĕрле, ищĕлсе анса, тĕтĕм мăкăрланса выртакан йапаласем урлă каçа каçа пырса, Вассіан схимонах шăтăкĕ çинҫи ҫиркĕве кĕҫĕ. Çавăнта вара

вёсем çак ҫиркў вутран йепле тӗлӗнмелле хӑтӑлса йулнине хӑйсен куçӗпе хӑйсем курса ӗненҫӗç. Ун ҫухне ҫиркӗвӗнҫе хӗрсе кайнӑ çтанисенҫен ҫӑтма çук вӗри çапса тӑнӑ; иконостасӗпе турӑшсем, Вассіан схимонах тупӑкӗ те пӗртте сийенленмен, анҫах вӗсем пур те çав тӗрлӗ хӗрсе кайнӑ, вӗсен çумне сӗртӗнме те çук пулнӑ. Алтарте престолпа парне вырӗнӗ çине тӑхӑнтарнӑ таврашсем те сыхӑ йулнӑ. Патша алӑкне карнӑ шупка-симӗс йапаларан çӗленӗ ҫаршав çӗнӗ пек курӑнса тӑнӑ, ҫиркӳре тӗтӗм, вӗри пулин те ҫаршава тӗтӗм хури-мӗн пӗртте çапман, ҫӳреҫисенҫи кӗленҫисем те пӗри те ванман. Çтанисемпе маҫҫи тӗтӗмпе хуралнӑран, ун ҫухне ҫиркў ӑшӗ тӗттӗм курӑннӑ та, анҫах, тавта-пуç Турра, çапах та çав нимӗн те хӑварман вутран ҫиркӳре мӗн пурри пур те пӗр сийенленмесӗр йулнӑ. Çак ӗçе Улатӑр исправникӗпе унӑн памушникӗ, тата монастыре пӑхма пынӑ хулари темӗн ҫухлӗ çын курҫӗç, кӗсем çак тӗлӗнмелле пулнӑ ӗçе пӗтӗм ҫӗрисемпе туйса илсе ӗненҫӗç.

Монахсем пурне те йӗри тавра пӑхса çаварӑнсан, ҫи малтанах çак ӑшша кайасран çӑлӑнса йулнӑ ҫиркӗве тасатма тытӑнҫӗç: маҫҫине, çтанисене шуратрӗç, иконостасне пӑртакçӑ сӑрларӗç: халӗ ӗнтӗ ҫиркӗвӗн ӑшӗ ӗлӗкхипе пӗрех пекех; монастырӗн хуйхӑ курмалла пулҫӗ пулин те, ҫиркӗве кӗнӗ çӗртипе тупӑк умӗнҫи кӑмрӑкланнӑ урай хӑми, монахсене Турӑ ырӑлӑхӗ çинҫен астутарса, ҫиркӳре куллен туса тӑракан кӗлле тӑвасран ҫарӑнма хушманнине пӗлтерсе тӑрать.

Улатӑрти Виç-Ипостаçлӗ Турӑ монастырин пуçлӑх архимандрит Гавріил.

Улатӑрти Турӑ Амӑшӗ çуралнӑ праçник соборин пуçлӑх благочинный протоіерей Николай Діомидов.

Турра йурӑхлӑ пулнӑ Вассіан схимонах канлӗхлӗ выртакан ҫиркӳ Улатӑр хулинҫе пулнӑ пушартан ҫӑлӑнса йулни ҫинҫен мӗн ҫырни пур те ҫӑннине ӗнентерсе алӑ пусрӑм:

Улатӑр уйасин исправник Владимір Неофитов.

Личный почетный гражданин Семен Виноградов.

# ОБЪЯВЛЕНІЕ.

**Въ складѣ изданій Православнаго Миссіонерскаго Общества при Симбирской чувашской учительской школѣ на чувашскомъ языкѣ имѣются:**

1. Букварь для чувашъ, ч. 1-я . . . 30 к.
2. Священная Исторія Аѳинскаго . . . 45 к.
3. Крат. разсказы изъ Священной Исторіи . 5 к.
4. Свв. Кириллъ и Меѳодій . . . . . 5 к.
5. Св. Евангеліе въ переплетѣ . . . 30 к.
6. Псалтирь въ переплетѣ . . . . 20 к.
7. Часословъ . . . . . . . . 50 к.
8. Молитвенникъ . . . . . . . 10 к.
9. Требникъ, ч. 1-я. . . . . . 1 р. 30 к.
10. Требникъ, ч. 2-я . . . . . . 70 к.
11. Октоихъ . . . . . . . 1 р. — „
12. Сборникъ молитвъ пѣснопѣній и чтеній изъ службъ, Минеи мѣсячной, Тріоди цвѣтной и молебствій . . . 1 р. 30 к.
13. Парастасъ . . . . . . . . 25 к.
14. Послѣдованіе молебнаго пѣнія, пѣваемаго во время бездождія . . . . . 10 к.
15. Высочайшій манифестъ 17 октября и его значеніе для русск. народа . . . 5 к.
16. Высочайше манифесты 6 августа, 17 октября и 3 ноября 1905 г. . . . . 10 к.
17. Великій канонъ св. Андрея Критскаго . 5 к.
18. Всенощное бдѣніе и Литургія св. Іоанна Златоуста . . . . . . . . 50 к.
19. Чинопослѣдованія литургіи св. Василія Великаго и св. Григорія Двоеслова . . 35 к.
20. Освященіе чувашскаго Александро-Невскаго монастыря Козмодем. у. . . 3 к.
21. Поученіе объ истинной вѣра . . . 2 к.
22. Бесѣды о Св. землѣ . . . . . 3 к.

**Печатается** Послѣдованіе во святую и великую недѣлю Пасхи.

**Готовятся къ печати:** Посланія св. апостоловъ и Апокалипсисъ и Сборникъ молитвъ пѣснопѣніи и чтеній изъ службы Тріоди постной

Съ требованіями обращаться къ Инспектору Симбирской чувашской учительской школы **Ивану Яковлевичу Яковлеву.**